ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

25 (4439) №, 2015, июнь (çĕртме), 18
(1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Вĕсем — пулас сăвăçсемпе çыравçăсем...



**«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» пултарулăх конкурсĕн çĕнтерӳçисене ытларикун Шупашкарти Чăваш патшалăх академи драма театрĕ умĕнчи Константин Васильевич Иванов палăкĕ умĕнче чысларĕç. «Чи лайăх эссе», «Чи лайăх сăвă», «Чи илемлĕ ӳкерчĕк» номинацисенче палăрнисене Дипломсемпе, парнесемпе хавхалантарчĕç.**

Жюри членĕсем сăмах илнĕ хыççăн Тутар Республикин Çĕпрел районĕнчи Аслă Аксу шкулĕн вĕренекенĕсем, вуннăмĕшĕнчи Таисия Фоминапа саккăрмĕшĕнчи Александра Ярмушова, сăвăсем вуларĕç.

– Эпир чăваш чĕлхине çав тери юрататпăр. Валентина Николаевна Ярмушова урокĕсене те хаваспах çӳретпĕр. Хастар педагогпа тунсăхлама вăхăт çук. Чăваш писателĕсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки тĕплĕн ăнлантарать вăл. Пĕрле тĕрлĕ кĕнеке вуласа ăна хак паратпăр. Хамăр шухăш-кăмăла пĕлтеретпĕр. Урок мĕн тери хăвăрт иртнине сиссе те юлаймастпăр, – теççĕ хастар пикесем.

Çамрăксем иккĕшĕ те юрра-ташша ăста. Кирек ăçта иртекен концертсене хаваспах хутшăнаççĕ, пултарулăхĕпе куракана хăпартлантараççĕ. Пушă вăхăтра яланах сăвă çыраççĕ. Саша вара ӳкерме те ăста.

Йĕпреç районĕнчи Пучинке шкулĕн вĕренекенĕ Ксения Шибаева 11-мĕш класран вĕренсе тухрĕ. Вăл «Чи лайăх эссе» номинацире 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Пур çĕрте те пултарулăхĕпе палăрнă пике аслă шкула вĕренме кĕрес ĕмĕтлĕ.

Ксюшăн пĕртăванĕсем те çав тери хастарскерсем. Пиччĕшĕ те хăй вăхăтĕнче «Букварьтен – илемлĕ литературăна çити» конкурсра пĕрре мар палăрнă. Шăллĕсĕр, Ильясăр, шкулта пĕр мероприяти те иртмест. Вĕренӳ отличникне республикăри чăвашлăхшăн тăрăшакансем пурте паллаççĕ. Ара, янăравлă саслă арçын ача сăвăсене мĕн тери чаплă вулать. Чăваш халăх артистки Вера Кузьмина та ăна пĕр конкурс хыççăн мăнукне юратнă пек ачашшăн çупăрласа пурнăçра ыррине суннă.

Шибаевсен хăй вăхăтĕнче çемье ансамблĕ пулнă, тăтăш уяв-концерта хутшăннă. Ăмăртусенче малти вырăнсене пĕрре мар йышăннă. Ашшĕ-амăшне кура ачисем те юрă-кĕвĕ тĕнчине туртăннă. Шкулта ĕçлекен, пушă вăхăтра калавсем çыракан, çынна кирек хăш вăхăтра пулăшма ăнтăлакан амăшĕ, Наталья Ильинична, ятарласа кашнин валли чăваш кĕписем çĕлеттернĕ.

Шел... Мал ĕмĕтлĕ те çамрăк Наталья Ильинична, кăçал юлашки шăнкăрав янăриччен темиçе кун маларах, хастар та пултаруллă ачисенчен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ... Унăн çутă сăнарне вара кашни вĕрентекенпе вĕренекен, тус-тăванĕпе ял-йыш ĕмĕр асра тытĕ...

*Луиза* ***ВАСИЛЬЕВА.***

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

**Вăхăт шав малалла шăвать. Сисмерĕмĕр те — çырăнтару тапхăрĕ те вĕçленсе килчĕ. Юлнă çичĕ кунпа усă курса «Тантăш» хаçатпа, «Тетте», «Самант» журналсемпе туслашма васкăр! Вĕсем — сирĕн чи çывăх тусăрсем тата пулăшаканăрсем!**

Çырăнтару вĕçлениччен
7 кун юлчĕ

«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2015 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн çырăнма васкăр

| ХЫПАР | Эрнекун ХЫПАР |
| --- | --- |
| ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ | |
| 798,06 тенкĕ | 345,54 тенкĕ |
| «ЧĂВАШ ПИЧЕТ» ТАТА «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» КИОСКĔСЕНЧЕ | |
| 288 тенкĕ | 150 тенкĕ |
| РЕДАКЦИРЕ (альтерн. майпа) | |
| 144 тенкĕ | 90 тенкĕ |

Çырăнар «Хыпар», савăнса вулар!

# Алра вылять ĕç



Таньăпа Ангелина Лукияновăсем çуллахи кану кунĕсене усăллă та тухăçлă ирттерес пирки чылайранпа ĕмĕтленсе пурăнчĕç. Тус-тантăшĕсемпе выляса савăнма, ашшĕ-амăшне пулăшма пулчĕç вĕсем. Кăшт кăна пушă вăхăт тупăнсанах алла кĕнеке, юратнă «Тантăш» хаçата тытма манмасса шантарчĕç. Çак ĕмĕт лара-тăра пĕлменскерсен пурнăçланса пырать иккен.

Ялта ĕç нумай. Таньăпа Ангелина та тўрех ăна кўлĕнчĕç. Пахчара пĕр тикĕс çитĕнекен севок йăранĕсене çумкурăкран тасатма тăрăшаççĕ. Унсăр пуçне кишĕр, хĕрлĕ кăшман, çĕрулми лаптăкĕсене те тирпейлесе пăхса тăраççĕ маттурсем. Çавăн пекех пахчаçимĕçе шăварма та манмаççĕ.

Аппăшĕпе йăмăкĕ вĕренўре те хастар. Сăмахран, Ангелина виççĕмĕш класран «пиллĕк» паллăсемпе кăна вĕренсе тухрĕ. Таня вара çитес вĕренў çулĕнче çиччĕмĕш класа кайĕ. Вăл та «тăваттă» тата «пиллĕк» паллăсемпе кăна туслă.

Аппăшĕсем Аленăпа Наталья тăван килтен тухса кайнă ĕнтĕ. Çавăнпа та пĕтĕм ĕç кĕçĕннисем çине тиенĕ. Ĕç пурнăç тыткăчи пулнине туйса та вĕренсе çитĕнеçĕ хĕрачасем. Ахальтен мар вĕсемпе аслисем питех те кăмăллă. Асламăшĕ вара пушшех те савăнать хăйĕн мăнукĕсемпе. «Маттурсем манăн», – тет мухтаса.

***Валентина МАКСИМОВА.***

Патăрьел районĕ,
Нăрваш Шăхаль.
**СĂНЎКЕРЧĔКРЕ:** маттур çамрăк çĕрĕçченĕсем.

# «Татах килесчĕ кунта!»

Хаваслă çу кунĕсем малалла пыраççĕ. Пирĕн шкулти сывлăхпа кану лагерьне пурĕ вăтăр икĕ ача çўрет. Кĕçĕн тата аслă классенче вĕренекенсем хальхинче кунта. Оксана Алексеевна Гурьянова лагерь начальникĕ ачасен сывлăхне çирĕплетмелли ятарлă планпа йĕркеленĕ сменăна. Л.Г.Александрова, Л.И.Ефремова тата М.В.Кудряшова воспитательсем тĕрлĕ мероприяти ирттерме тăрăшаççĕ. Сывлăха çирĕплетмелли хăнăхтарусем, харпăр тĕрлĕ фокус туса юлташĕсене савăнтарнине тата тĕлĕнтернине паян та кашниех астăвать. Çакăн хыççăн ытисем те çав фокуссене туса пăхнă. Анчах пурин те тўрех пулмасть иккен. Денис вара кашнине унăн вăрттăнлăхĕсене уçса панă. «Туслă пурăннине мĕн çиттĕр?», – теççĕ юлташсем. Лолита Кудряшова ют чĕлхепе юрă шăрантарчĕ, Илья Лукин вара кулăшла юрăпа куракансене савăнтарчĕ.

Аслă классенче вĕренекенсем те пĕр самант та ахаль лармаççĕ. Шкулти, ун тав-



хăйне йĕркеллĕ тытмалли пирки калаçусем йĕркелеççĕ, çул-йĕр çинчи правилăсемпе тăтăшах паллаштараççĕ. Ачасенчен чылайăшĕ лагере велосипедпа çўрет. Çавăнпа та çул çинче яланах асăрханулла та тимлĕ пулмалла. Çакăн пирки кунта яланах аса илтереççĕ.

Кашни отряд хăйĕн ятарлă планĕпе ĕçленĕ май сменăри пурнăç питех те интереслĕ иртет. Тĕрлĕ спартакиада та ачасен асĕнчех. Кĕçĕн классенчисем скакалкăпа сиксе, турник çинче туртăнса, пĕчĕк мечĕке инçĕшне персе, çĕр метрлă дистанцие чупса ăмăртнă. Денис Петров, Павел Никифоров, Андрей Дмитриев, Лолита Трофимова, Катя Лазукина пур ăмăртура та палăрма пултарнă. Çул-йĕр правилисемпе çыхăннă ўкерчĕксен конкурсне вара кашни хаваспах хутшăннă.

«Минута славы» конкурсра Денис Петров рашĕнчи ĕçсене ушкăнпа самантрах туса хураççĕ. Кар тăрса ĕçлеççĕ, пĕрле канса савăнаççĕ.

Ирина Семеновна Лукина тата Елена Павловна Михайлова поварсем лагерьте канакансене тутлă та тĕрлĕ витаминран пуян апат-çимĕçпе сăйлаççĕ. Сĕтел çинчен улма-çырла, канфет-печени татăлма пĕлмест.

Лагерь смени ерипен пулин те вĕçленсе пырать. Ачасене «Сире кунта килĕшет-и?» – тесе ыйтсан, вĕсем пĕр тăхтамасăр: «Паллах, кунта эпир татах та канма хатĕр!» – теççĕ.

***Екатерина ГРИГОРЬЕВА,***
***вĕрентекен.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.
**СĂНЎКЕРЧĔКРЕ:** лагерьте канакансен ушкăнĕ.

# Маша – чи çывăх тус



Май уйăхĕн вĕçĕнче юратнă шкулта тăваттăмĕш класс вĕренсе пĕтерекенсем линейкăна пухăнчĕç. Пирĕн тăваттăмĕш «г» класс ертўçи Татьяна Геннадьевна Кондрашкина тата шкул администрацийĕн ĕçченĕсем пурне те саламларĕç, çак тăватă çулта конкурс-ăмăртăва, предмет олимпиадисене хастар хутшăннă ачасене грамотăсемпе дипломсем парса хавхалантарчĕç.

Хăш-пĕр вĕренекенсем вĕренўре лайăх ĕлкĕрсе пынăшăн Тав хучĕсем те илме тивĕç пулчĕç. Вĕсен йышĕнче манпа пĕр класра ăс пухакан Маша Порфирьева та. Пирĕн 4 «г» класра вăл – чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри. Унсăр пуçне Маша «Çултапăк вĕренекенĕ» ята тивĕçрĕ. Чăваш чĕлхипе иртнĕ «Чăваш чĕкеçĕ» тата вырăс чĕлхипе иртнĕ «Чĕлхе пĕлĕвĕ – пурин валли те» конкурссенче нумай балл пухнăшăн ăна Дипломпа сертификат парса чысларĕç. Пултаруллăскер «Вырăс упа çурийĕ», «Кенгуру» тата «Всезнайка» конкурс-вăйăсенче çĕнтернĕшĕн Диплома тивĕçнишĕн питех те хĕпĕртерĕм.

Маша – манăн чи çывăх тус. Вăл пур çĕрте те хастар, вĕренўре маттур. Ĕçчен те сăпайлăскер яланах мана, ашшĕпе амăшне, аслашшĕпе асламăшне, кукашшĕпе кукамăшне вăйĕ çитнĕ таран пулăшма тăрăшать. Эпир пĕрле шкулти юрă, ташă, музыка кружокне çўресе тавракурăма аталантаратпăр. Иксĕмĕр те фортепиано калама вĕрентĕмĕр. Çак ăсталăхсене алла илме ырă кăмăллă вĕрентекенсем хăнăхтарнăранах пуль эпир унта кашнинчех хаваспах çул тытатпăр.

Энĕ Машăпа çывăх тусланишĕн питĕ хĕпĕртетĕп, унпа мăнаçланатăп.

***Настя АРХИПОВА.***

Шупашкар,
61-мĕш шкул.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1367 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 2297
Пичете июнь уйăхĕн 17-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

## Кану лагерĕ пурин кăмăлне те тивĕçтерет



**Вĕренӳ çулĕ вĕçленсенех шкулта çуллахи лагерьсем ĕçлеме пуçларĕç. Советски шкулĕнче те çавăн пекех, çулсерен каникулта кану лагерĕ уçăлать. Кăçал унти кĕçĕн отрядра иккĕ тата тăваттăмĕш классенчен вĕренсе тухнă çирĕм ача.**

Алена Васильевна Охотникова лагерь начальникĕ унăн планĕпе те палластарчĕ. Çирĕм пĕр куна тăсăлакан канăвăн кашни кунне ачасемшĕн интереслĕ те усăллă ирттерме тăрăшаççĕ воспитательсем – Валентина Степановна Александровăпа Ольга Васильевна Арсентьева.

Кашни ире зарядка тăвассинчен пуçлани хĕрачасемпе арçын ачасене физкультурăпа спортпа туслашма пулăшать. Тĕрлĕ хускану тунă хыççăн, кун йĕрки тăрăх – ирхи апат, унтан вăйăсем, конкурссем, мероприятисем иртеççĕ. Етĕрнене экскурсипе музейсене, «Присурье» физкультурăпа спорт комплексне бассейна ишме кайма та палăртса хунă ертӳçĕсем. Ытти шкул ачисемпе тĕллпулса спорт ăмăртăвĕсем ирттересси те йăлана кĕнĕ. Хастар та маттур хĕрачасемпе арçын ачасем унта хаваспах хутшăннине каласа пачĕç. Çĕнтерӳ вĕсемпе пуласси ĕненсех тăраççĕ мал ĕмĕтлĕскерсем. Кĕçех спартакида та иртĕ.

– Ăмăртусенче çаврăнăçулăхĕпе, хастарлăхĕпе палăракан, спортпа туслă, тăтăшах çитĕнӳсемпе савăнтаракансенчен пĕрне – Веня Дмитриева – уйрăмах палăртса хăварас килет, – терĕ Надежда Анатольевна Петрова физкультура учителĕ. – Вăл хăвăрт чупакансен, турник çинче чи нумай туртăнакансен йышĕнче яланах малта! Чăн-чăн шкул мăнаçлăхĕ. Ахăртнех Веня хăйĕн вĕрентекенĕнчен тĕслĕх илсе хавхаланать, ара Надежда Анатольевна – самбопа спорт маçтăрĕ, Раççей чемпионĕ ятне те тивĕçнĕ-çке! Апла вĕренекенсем çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума ăнтăлнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Лагерьти кану сехечĕсене сая яма хăнăхман воспитательсемпе ачасем. Кунсерен тĕрлĕ пултарулăх конкурсĕнче те маттурлăхĕпе палăраççĕ кĕçĕннисем. Акă нумай пулмасть П.П. Бажов юмахĕсем тăрăх ирттернĕ викторинăра та хастар пулчĕç вĕсем.

«Сире лагерьте мĕн ытларах килĕшет?» – тесе ыйтсан «Футбол!» – терĕç тӳрех арçын ачасем. «Мозаика пуçтарасси», – сăпайлăн калаçрĕç хĕрачасем. Чăнах, кашниййĕ кунта хăйĕн чун киленĕçне, хăйне тивĕçтерекен ĕç тупать. Тутлă апат вара пурин кăмăлне те кайнине пĕлтерчĕç маттурсем.

– Лагерь тепĕр виçĕ уйăха тăсăлсан та аван пулĕччĕ, – ĕмĕтленсе калаçрĕç вĕсем. – Кунта эпир юлташсемпе пĕрле вылятпăр, савăнатпăр. Килте вара пĕччен кичемтерех.

Каникулта пĕр-пĕриншĕн тунсăхласса ассăн сывласа пĕлтерчĕç ачасем. Çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче вара юлташсемпе сӳтсе явмалли чылай пулĕ, çакă савăнтарать вĕсене.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Етĕрне районĕ,
Советски шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

## Аваллăха таврăнса

Шкулти ĕçпе кану лагерьне çӳрекенсем çуллахи каникул кунĕсене питех те тухăçлă, усăллă ирттереççĕ. Вĕсем канаççĕ çеç мар, таврапурăма анлăлатас тĕллевпе мероприятисем йĕркелеççĕ, унта хастар хутшăнаççĕ.

Лагерь смени пуçлансан темиçе кунранах вĕсем хăйсен тăрăхĕнче вырнаçнă Исванккă хулашне кайса курчĕç. Хулаш пысăках лаптăк йышăнмасть – унăн вăрăмăшĕ 110 метр, сарлакăшĕ – 25 метр. Хулашра тĕпчевçĕсем тăхăрвунă çул каяллах шырав ĕçĕсем тума пуçланă. Г.П.Пасек, Б.А. Латынина тĕпчевçĕсем хăй вăхăтĕнче ку тăрăхра пулнă. 1956 çулта вара чăваш археологĕсем те хулаш таврашĕнче тĕрлĕ япала тупнă. Историре палăрса юлнă вырăн пушарта çунса кĕлленнĕ.

Лагерьте канакансем те çакăнта пулса курни вĕсен асĕнче нумайлăха юлĕ. Историри паллă вырăн хăйсен çывăхĕнчех-çке. Тен, кунта вĕренекенсенчен хăшĕ те пулин малашлăхра тĕпчевçĕ те пулĕ. Аваллăха пĕрремĕш утăм турĕç те хальхинче.

Элĕк районĕ,
Йăлкăш шкулĕ.
**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:**
авалхи хулаш вырăнĕнче.



## Тата тăрăшуллăрах пуласчĕ




Пирĕн шкулта пултаруллă та тăрăшуллă ача сахал мар. Вĕсенчен пĕри çитес вĕренӳ çулĕнче пиллĕкмĕш класа каякан Мария Пакулаева. Вăл хастар, ĕçре маттур та правур, вĕренӳре малтисен ретĕнче. Мария ыттисемшĕн тĕслĕх пулни пирки никам та иккĕленмест.

Çирĕп шанчăк пурри пирки никам та иккĕленмест – хĕрача вĕренӳре «пиллĕк» паллăпа кăна ĕлкĕрсе пырать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕ те уншăн питех те ăнăçлă вĕçленчĕ. Тĕрлĕ конкурса хутшăнса нумай диплома тивĕçрĕ маттурскер. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшли – республикăри шкулсенче тăваттăмĕш класс вĕренекенĕсем хушшинче иртнĕ олимпиадăра чи пултаруллисен йышне лекнине çирĕплетни.

Паян та вăл алран кĕнеке ямасть. Пушă вăхăт тупсанах вулать, тавракурăмне анлăлатать. Çавăнпа та Мария «Çитес вĕренӳ çулĕнче татах та тăрăшуллăрах пуласчĕ», – тет.

Тĕллеве пурнăçлама тăрăшсан çитĕнӳ пулатех.

***Ирина ФЕДОРОВА,***
***вĕрентекен.***

Çĕмĕрле районĕ,
Якуртушкăнь вăтам шкулĕ.
**СĂНӲКЕРЧĔКРЕ:** Мария Пакулаева.

Тантăш 5
25 №, 2015, июнь, 18

# «Чечексене татмастăп, мĕншĕн тесен юрататăп»



Çак кăвак куçлă та кăвак кĕпеллĕ хĕрача симĕс курăк хушшинчи кăвакарчăн куçĕ чечек пекех туйăнса кайрĕ. Еплерех çирĕп кăмăллă та тирпейлĕ тата хăй. Лагерьти тусĕсемпе вăхăта хаваслă ирттернĕ май вичкĕн куçĕпе йĕркелĕхе сăнасах тăрать: пĕрисене чарусăрланнăшăн асăрхаттарать, теприсенчен ырă тĕслĕх илме тăрăшать. Тин кăна пĕрремĕш класран вĕренсе тухнă пулин те питĕ ăслăн калаçать тата.

– Пĕрремĕш класа вĕренме килсен кунта хамăн юлташсене куртăм та питĕ савăнтăм, – тет Нина Матвеева. – Пире Надежда Яковлевна вĕрентекен кĕтсе илчĕ. Шкул мана тӳрех килĕшрĕ. Садике çӳренĕ чухнех эпĕ ун çинчен ĕмĕтленнĕ вĕт.

Акă Нина ӳкерме те, çырма та, вулама та, ташлама та хăнăхрĕ. Çавăнпа вăл вĕренĕвĕн пĕрремĕш çулĕпе питĕ кăмăллă. Шкулта ачасем чылай, пĕрле тĕрлĕрен вăййă выляма аван. Нинăн ĕмĕчĕсенчен пĕри вара – нумайрах тус-юлташ тупасси.

Ашшĕ-амăшĕ хĕрачана мĕн пĕчĕкрен çутçанталăка upraма вĕрентсе ӳстерет. Юратнă тĕпренчĕкĕ çывăх çыннисен кашни сăмахне ăса хывать.

– Пирĕн енчи уй-хирте темĕн тĕрлĕ чечек те пур. Эпĕ вĕсене татмастăп, мĕншĕн тесен питĕ юрататăп, – тет Нина.

Кашни хурт-кăпшанкăна, йывăç-курăка хисеплекен хĕрача пуласлăхра хăйне парикмахер пек курать, мĕншĕн тесен çӳç-пуçа илемлĕ пуçтарасси уншăн чун киленĕçĕ пекех. Ахăртнех, чечексене пит юратнăранах хĕрачасене те чечек евĕртерех курăнма пулăшасшăн вăл.

# Йывăрлăхран хăрасан малалла каяймăн



Тин кăна Миша та пĕрремĕш класа килнĕччĕ-çке, халĕ виççĕмĕшĕнчен вĕренсе тухрĕ. Вăхăчĕ епле хăвăртлăхпа чупать-ши? Тепĕр тесен, Мишăна ку çав териех хумхантармасть, мĕншĕн тесен вăл шкулта иртекен кашни саманта хаклама пĕлет. Вĕренӳре маттур, ытти ĕçре те хастар пулнăран ăна çуллахи лагерьте «Хĕвел» отряд командирĕ пулма шаннă. Арçын ача хăйĕн тивĕçне питĕ аван пурнăçлать.

Миша – шкул пурнăçĕнчи хастар ачасенчен пĕри, отличник. Предмет олимпиадисене тăтăшах хутшăнать. Кăçал чăваш чĕлхипе районта пĕрремĕш вырăн йышăннă. Надежда Анатольевна Тарасова вĕрентекен лайăх пĕлӳ панăран арçын ача изложенисене те çăмăллăнах çырать. Çавăн пекех «Тантăш» хаçата юратса вулать.

– Ытти ачасен сăввисемпе паллашнă май хамăн та çырас килет те çав, анчах йывăртарах пек, – пăшăрханать Миша.

Районта иртекен тĕпчев ĕçĕсен ăмăртăвĕсенче тăтăшах палăрать вăл. «Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурсра çĕнтерни ачан тăрăшулăхне кăтартса парать. Спортра туслăскер Мăн Явăш ял тăрăхĕнче иртекен «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» ăмăртура пĕлтĕр те, кăçал та çĕнтернĕ. Ахальтен мар вăл йĕлтĕрçĕ пулма ĕмĕтленет.

– Эпĕ ултă-çичĕ çулта чухне атте ман валли Етĕрнерен йĕлтĕр туянса килнĕччĕ, – каласа парать Миша. – Çак спорт тĕсне çавăн чухне хăнăхма пуçларăм. Малтанлăха йывăртарахчĕ. Аттепе иккĕн тăтăшах ярăнма тухаттăмăр та пĕчĕккĕн хăнăхса çитрĕм. Тӳрĕ çĕрте аванахчĕ, çырмана аннă чухне шиклентертчĕ. Халĕ хăрамастăп.

Тăрăшни ӳсĕм патне илсе çитерет. Класри тантăшĕсенчен йĕлтĕрпе Мишăран хăвăрт каякан та çук.

Çуллахи вăхăтра епле арçын ача пулла çӳремесĕр тӳстĕр ĕнтĕ? Миша та час-часах вăлта çĕклесе ялти пĕве хĕрне утать. Карассем, уланкăсем чылай унта.

– Пысăкраххине тытсан анне мухтать, пĕчĕккисене вара эпĕ тӳрех каялла шыва яратăп, – тет вăл. – Хăш чухне ниметкепе те /пулă тытмалли пысăк ăскăч/ тытатăп пуллисене, анчах вăлтапа чылай кăсăкларах.

Миша ял пурнăçне питĕ кăмăллать. Йывăç лартас ĕçе вăл çулсеренех хастар хутшăнать. Улмуççи, чие, слива йывăççисене юратса çитĕнтерет. Пахчара ĕçлеме килĕшет ăна.

– Чечек пахчинче аттепе анне хăйсемех тăрăшаççĕ, садике çӳрекен пĕчĕк йăмăкăм та пулăшма хăтланать, – тет Миша.

Ялти çутçанталăк килĕшет пулин те выляма тус-тантăш сахалрах пулни питĕ кулянтарать арçын ачана. Юратьха, шăллĕпе йăмăкĕ пур, вĕсемпе хаваслă.

– Ачасем, пурте туслă пурăнăр, ан вăрçăнăр. Эпĕ вулама юрататăп, эсир те хаçат-журналтан ан сивĕнĕр, – çапла сĕнӳ пачĕ Миша «Тантăш» вулаканĕсене.

*Лариса ПЕТРОВА.*

Етĕрне районĕ,
Кивĕ Тинкеш шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕсем.**

# Спорта чунĕпе парăннă Оля



Физкультура урокне васкакан ачасем Лариса Ивановна Мышева вĕрентекене пĕрре те канăç памаççĕ. «Пирĕн сирĕнпе паян урок пур-и?» – тесе пыра-пыра ыйтаççĕ. Шкул хăйĕн çамрăк спортсменĕсен çитĕнĕвĕсемпе мухтанать. Вĕсем çинчен сăмах пуçарсан вĕрентекенсен пичĕсем йăл кулăпа çуталчĕç.

Пултаруллисенчен те пултаруллăраххи вара тăххăрмĕш класра вĕренекен спорт ориентированийĕн ăсти Оля Филиппова пуль тесе шухăшлатăп. Хăй вăтаннине систермесĕрех вăл ыйтусем çине хуравлама килĕшрĕ.

– Миçе çулта туслашнă-ха эсĕ спортпа? Вăл енне сана мĕн туртрĕ?

– Спортпа туслашма мана сывлăха çирĕплетес шухăш хистерĕ, – каласа кăтартрĕ хĕр. – Пĕрремĕш класранпах спортпа туслă эпĕ. Çын умĕнче мухтанассишĕн мар. Хама тĕрĕслес килетчĕ, яланах çирĕп сывлăхлă пулас шухăш пуçра тахçанах тĕвĕленчĕ. Унсăр пуçне тавра курăма анлăлатас килет. Иккĕмĕш класра, ăмăртура çĕнсе илнĕ 2-мĕш вырăн пĕрремĕш ăнăçлă кăтарту пулчĕ, – аса илет Оля.

– Чи асра юлнă ăмăрту пур-и?

– Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне Пушкăрт Республикине кайнăччĕ. Урал тăвĕсем çинче пулчĕ ку. Унта спорт ориентированийĕпе ачасем хушшинче ирттернĕ Раççей чемпионатне хутшăнтăм. Йывăрлăхсене пăхмасăр çĕнтертĕм çапах та. Ытти хуласенче те пултăм. Чулхулара та, Костромара та, Мускав облаçĕнчи хуласене те çитсе куртăм, – каласрĕ Оля хавхаланса.

– Кану кунĕсене мĕнле ирттеретĕн? Малашнехи пурнăçна спортсăр курмастăн та пуль?

– Çапла, спортзалпа стадион тăван кил евĕрех пулса тăчĕç маншăн. Ара, эпĕ спортпа туслашни кĕçех вунă çул çитет, сахал мар вĕт? Кану кунĕсенче те виçĕ-тăвата сехет спорт валли хăваратăп. Юратнă чун киленĕçне пăрахас килмест. Шкул пĕтернĕ хыççăн та суйланă çулпах каяс шухăшлă эпĕ.

Пушă вăхăтра вара вăрман уçланкинче уçăлса çӳреме юрататăп. Чылай вăхăт ирттерме пултаратăп унта. Вăрман «кĕнекине» ачаранпах вулама вĕреннĕ ĕнтĕ эпĕ, çакă мана ăмăртусенче те пулăшать, – терĕ пике.

– Тавтапуç кăмăллă калаçушăн. Малашне те шикленмесĕрех малалла ут.

*Иван ДЕРЮЖИН.*

Шупашкар,
33-мĕш шкул.

1941 çулхи сентябрь уйăхĕнче Ленинграда нимĕçсем бомба çине бомба пăрахма тытăнсан хăрушă кунсем пуçланнă. Йывăр вăхăтра шкул ачисем те алă усса ларман. Акă вунпиллĕкри Михаил Тихомиров пушара хирĕç кĕрешекенсен отрядне ертсе пынă. Пĕррехинче, вут-çулăмпа хастар кĕрешнĕ хыççăн: «Хĕрлĕ автана» парăнтартăмăр!» – тесе кăшкăрса янă. Мишăн çӳçĕ çăнăх пек шап-шурă пулнă. Анчах вăл нимĕнле çăнăх та пулман... Унăн çӳçĕсем пушара сӳнтернĕ чухне самантрах шуралнă... Тепĕр темиçе уйăхран арçын ача хулана нимĕçсем атакăланă чухне ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупнă.

Унăн ашшĕпе амăшĕ учительте вăй хунă. Лидия Дмитриевна математикăпа вĕрентнĕ. Василий Владимирович завучра тăрăшнă. Вăл Ленинградри учительсенчен чи пĕрремĕш РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ ята тивĕçнĕ.



# Кун кĕнекинчи вĕçленеймен йĕркесем...


НОРМЫ ВЫДАЧИ ХЛЕБА
В ОСАЖДЕННОМ ЛЕНИНГРАДЕ
ДО 25 ДЕКАБРЯ 1941 г.

| Дата установления нормы (в граммах) | Рабочие | Служащие | Иждивенцы | Дети |
|---|---|---|---|---|
| 11 сентября | 500 | 300 | 250 | 300 |
| 1 октября | 400 | 200 | 200 | 200 |
| 13 ноября | 300 | 150 | 150 | 150 |
| 20 ноября | 250 | 125 | 125 | 125 |



## Ленинград.

### 1941 çулхи декабрĕн 8-мĕшĕ.

Кун кĕнекине каçхине çырма пуçăнтăм. Кунсем чаплах мар. Ирхине 23 градус сивĕччĕ. Каç енне çанталăк çемçелчĕ. Çулсене юр хĕвнĕрен трамвайсем çӳреймеççĕ. Паян шкулта 3 урок çеç пулчĕ. Топливо çитсе пымасть. Кунне кашни ачана 125 грамм çăкăр чĕлли лекет. Уйăхне 400 грамм кĕрпе, кăшт канфет тата çу параççĕ. Кунне икĕ хутчен ир тата каç апатланатпăр. Киле валли 5 кило столяр çилĕмне илсе хутăмăр. Ăна вĕретсе лавр çулçи яратпăр, горчицăпа çиетпĕр.

### Декабрĕн 9-мĕшĕ.

15 градус сивĕ. Ир пуçласа каçчен унтан та кунтан пăшалтан пени илтĕнет. Паян ачасене шкулта карточкăсăрах шĕвĕ яшка çитерчĕç. Ку та кăмăла çĕклерĕ. Ним те çукки мар вĕт. Ирхи 10 сехетрен пуçласа каçхи 17 сехетчен çутăсăр ларатпăр. Юлашки уроксенче пушшех йывăр пире. Курăнми пулать. Тăхтавра картишĕнчен кăмака хутма вутăсем илсе кĕтĕмĕр. Каçхи сакăр сехетре çывăрма выртатăп.

### Декабрĕн 10-мĕшĕ.

Çанталăк ĕнерхи пекех. Ирхине 6 сехетре анне канфет илме тухса кайрĕ, шел, усси пулман. Нимсĕрех таврăнчĕ. Анне алса çĕлесе пачĕ. Аван, ăшă та хитре. Паян 10 çĕрулмирен 2 кастрюль яшка пĕçертĕмĕр. Çилĕм вара хулипе те çук... Кĕçех кăмака хутăпăр та ăшăнăпăр. Сĕтел хушшинче вĕри кофе ĕçсе сасăпах кĕнеке вулăп. Кун кĕнекине çутă панă хыççăн çеç, каçхине çыратăп.

### Декабрĕн 11-мĕшĕ.

Ытла сивĕ пулнăран тăвата урок çеç пулчĕ. Малашне те ырринех кĕтес çук пулĕ. Каçхи апата сĕтел хушшине каярах ларатпăр. Сас-хура тăрăх пĕр кунлăх çăкăр чĕллине ӳстерсе парасси пирки калаçаççĕ. Те тĕрĕсех ĕнтĕ. Е тата эвакуаци пирки сăмахлаççĕ. Çурран хуларан урăх çĕре 200-250 çухрăм утмалла тесе çирĕплетеççĕ.

### Декабрĕн 12-мĕшĕ.

Каçхине çил-тăман вăйлă вĕçтерчĕ. Çулпа утма çав тери кансĕр. Юрать паян анне çĕлесе панă алсише тăхăнтăм. Алă шăнмасть. Ăшă. Анне çемьене паракан 800 грамм макарона кайса илчĕ. Ăна тӳрех 10 кун апат пĕçермелĕх пайласа хучĕ. Паян купăста яшки çирĕмĕр. Тутлă. Атте шкула каçхи хурала кайрĕ. Хăйпе пĕрле икĕ хулăм утиял илчĕ. Ăшă шăлавар та тăхăнчĕ. Ара, шкулта питĕ сивĕ-çке! Халĕ эпир виççĕн вулатпăр. Кĕçех çывăрма каятпăр. Тĕрĕссипе, çак кунсенче çав тери начарлантăмăр. Ура вăйĕсем те пĕтрĕç. Утма та йывăр. Паян вутă татнă чухне пĕрре мар сулăнса кайрăм.

### Декабрĕн 13-мĕшĕ.

Атте шкулта чиперех çĕр каçнă. Киле кăшт маларах таврăнчĕ вăл. Пурте пĕрле кăмака çумне тĕршĕнсе кофе ĕçрĕмĕр. Паян иртерех çывăрма выртасчĕ. Пĕррехинче питĕ çывăрса тăранас килет... Тата тăраниччен апат çиесчĕ...

### Декабрĕн 14-мĕшĕ.

11 сехетченех çывăрнă. Кун сисĕнмесĕр иртрĕ. Апат пĕçертĕмĕр. Кĕнеке вуларăм. Вырсарникун ячĕпе шăккалат та лекрĕ. Çилĕмрен çăрса тунă шăккалат евĕр катăксене шутларăм. 31 плитка. Шăп та лăп пĕр уйăха çитет.

Хулара вилекен çынсем нумайланчĕç. Тупăксене çуна çине хурса масара илсе каякана куллен курма пулать. Пытарма укçа тупайманнисем вилене ахаль материалпа чĕркесе çăва çине утаççĕ.

### Декабрĕн 15-мĕшĕ.

Тулта 25 градус сивĕ, тавраллах тĕтре карса илнĕ. Пурте асăрханă тăрăх манăн пит-куç кунсерен шыçăнать. Малашне шыв сахалтарах ĕçмелле пулĕ тесе шухăшлатăп. Тĕрĕссипе, хулара шыçăнса кайнă çынсем нумайланчĕç. Малтанах ура шыçма пуçлать. Шыççи кайран çӳлелле хăпарать пĕчĕккĕн. Нумайăшĕ вилеççĕ. Шкултан килнĕ чухне çӳç вирелле тăрать. Унта та кунта вилесем...

### Декабрĕн 16-мĕшĕ.

Пĕрремĕш урок хыççăн сивĕ тесе урăх шкула куçарчĕç. Унта пушшех сивĕ иккен. Пĕлместĕп, икĕ урока епле чăтса ирттертĕмĕр-ши? Анне киле килессе кĕтетпĕр. Вăл таврăнсанах кăмака хутса апат пĕçерĕпĕр.

### Декабрĕн 17-мĕшĕ.

Физика учителĕ чирленĕрен виçĕ урок кăна иртрĕ. Шĕвĕ яшкасăр пуçне повидло та астиврĕмĕр паян. Ирхине çăкăр чĕллине кофепе ĕçме хăварнăччĕ, акă халĕ ăна васкаса çиетĕп. Шкулта эпĕ пачах та çырмастăп. Май çук. Сивĕ. Вĕрентекен сăмахĕсене итлесе ларни те çителĕклĕ маншăн.

### Декабрĕн 18-мĕшĕ.

Химипе тĕрĕслев ĕçĕ ирттертĕмĕр. Алăсем шăнса татăлса ӳкеççĕ пулĕ тесе шухăшларăм. Эх, хăçан вĕçленĕши ку вăрçă? Урамсенче тĕрлĕ калаçу илтме пулать. Хăшĕ-пĕри çирĕплетнĕ тăрăх çак нуша-терт çак уйăха кăна тăсăлать. Темле ĕнтĕ, такама ĕненмелле... Пирĕн купăста та пĕтет. Малашне мĕнпе яшка пĕçермелле? Пурнăç ырă енне улшăнасса хамăр та чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

### Декабрĕн 19-мĕшĕ.

Шкултан таврăнсан хĕрӳ ĕçе тытăнатпăр. Вутă татса çуратпăр, кăмака хутатпăр. Çан-çурăм йывăрланнине алла пăчкă тытсан сисĕнет. Алăсем те хăвăрт ывăнаççĕ. Ĕнтĕ кăмака хутрăмăр. Ăшă шывпа пуçа, ал-урана çурăмăр та вырăн таврашне улăштартăмăр.

### Декабрĕн 20-мĕшĕ.

Шкулта нумай ĕçлерĕмĕр паян. Икĕ сехете яхăн юр тасатрăм, атте вутă татса хатĕрлерĕ. Кăштахран ытти ачасемпе пĕрле шкул тата учительсем валли завода «буржуйка» кăмака илме кайрăмăр. Завочĕ масара хирĕç вырнаçнă. Унта тем чухлĕ тупăка курсан чун сӳ! турĕ. Каялла килнĕ чухне вилнĕ çынсен ӳчĕсем çул çинчех выртнине асăрхарăмăр, каллех чунра япăх пулса кайрĕ. Шкула пилĕк кăмака илсе ăнтăлтăмăр. Вĕсенчен пĕрне аттепе çуна çине хурса киле илсе кайрăмăр. Анне çав тери хĕпĕртерĕ. Чугун кăмакана хутсан пӳлĕм тӳрех ăшăнчĕ. Аван.

### Декабрĕн 21-мĕшĕ.

Вырсарникун. Пӳрт ăшшипе рехетленсе 10 сехетченех çывăрнă. Халĕ кăнтăрла иртни 2 сехет. Тĕттĕмленет. Тин кăна хулари шăв-шав лăпланчĕ. Нимĕçсем пеме пăрахрĕç курăнать. Хăрушă. Çуралнă кун аван иртрĕ. Мана хитре парнепе, рисовани альбомĕпе, кĕнекепе савăнтарчĕç. Çак кун икĕ чашăк яшка, бутерброд, пăтă юратса çирĕм. Тинех тăрантăм. Чейпе ĕçме канфетсем те пулчĕç. Аван иртрĕ уяв. Питĕ килĕшрĕ.

### Декабрĕн 22-мĕшĕ.

Урамра кӳлленчĕксем. Вăй-хал куллен чакнине туйса пыратăп. Утма та йывăр. Ĕçлеме те. Ялан ларас килет. Çĕнĕ çулта пурнăç ырă енне улшăнасса шанатпăр-ха та...

### Декабрĕн 23-мĕшĕ.

Каллех сивĕтрĕ. Урамра пăрлак. Асăрханса утмалла. Шăм-шак йывăр. Çитес вăхăтра ырă улшăнусем пуласса шанатпăр. Юрать, çав чаплă кăмакана пула пӳртре ăшă. Ăна кашни кун хутатпăр, пĕр кунлăх яшка пĕçеретпĕр. Çĕрулми, купăста, кĕрпе питĕ сахал юлни чăннипех те пăшăрхантарать. Хаçат вуласа пĕлнĕ тăрăх, нимĕçсем хуларан тараççĕ. Совет салтакĕсем вĕсене кĕçех Ленинградран хăваласа ярасса чăтăмсăррăн кĕтетпĕр.

### Декабрĕн 24-мĕшĕ.

Пĕр хаваслăх та çук. Утса çӳреме те кансĕр пула пуçларĕ. Çакна эпĕ кăна мар, ыттисем те çаплах çирĕплетеççĕ. Паян черчени учителĕ вилнине пĕлсен куçăм куççульпе тулчĕ. Литература вĕрентекенĕ те шкула çӳрейми пулнă... Атте каланă тăрăх, вăл та кĕçех ĕмĕрлĕхех пирĕнтен уйрăлса каять. Питĕ шел... Ах, ку выçлăх-и? Чылай учитель аран-аран уткалать, хам пекех. Карточкăпа паракан апатçимĕçе вăхăтра илнĕ пулсан-и?

### Декабрĕн 25-мĕшĕ.

Ӳслĕке ернĕ Нинель аппа шкула каймарĕ... Класа кĕрсен савăнăçлă хыпар пĕлтерчĕç. Малашне пире кунне çăкăр чĕлли 200 грамм лекет! Мĕн тери телей!

### Декабрĕн 26-мĕшĕ.

Çутă пулманран уроксем пулмарĕç. Килте вутă çуртăм та атте таврăнасса кĕтрĕм. Вăл килсен повидлопа кофе ĕçрĕмĕр. Кайран анне киççельпе хăналарĕ. Кун пек пулсан пурăнма пулатех.

### Декабрĕн 27-мĕшĕ.

Урамра çирĕм градус сивĕ. Шкула каймарăм. Кантăк çине сивĕ тĕрлĕ эреш ӳкерсе хăварнă. Кĕçех кăмака хутмалла.

### Декабрĕн 28-мĕшĕ.

Ир-ирех самолетсем кĕрлени чуна шиклентерет. Вăрăм черете кĕтсе илтĕмех. 3 катăк сахăр, 500 грамм тип çу, пĕр курупкă шăрпăк илме пултартăм. Акă ăçта вăл савăнăç! Çапах шăм-шак самайланни çук. Унчченхи пекех вăйсăр эпĕ.

### Декабрĕн 30-мĕшĕ.

Ĕнерхипе танлаштарсан аванрах туятăп. Анне паян кăшт какай тупса килме пултарчĕ. Аш-пăшне чылайранпа тутанманччĕ. Тата шывпа йĕпетнĕ çăнăх илсе килнĕ. Ăна эпир çатмара ăшаларăмăр. Чаплах пиçмерĕ. Пыра та хĕртет, шăл çумне те çыпçăнать. Хырăм выçă та çимелле ĕнтĕ.

### Декабрĕн 31-мĕшĕ.

Кăмăлсем питĕ аван. Ара, Çĕнĕ çула кĕтсе илетпĕр-çке паян! Сĕтел те ытти кунсенчипе танлаштарсан пуянрах пулĕ-ха. Анне тăрăшать.

### 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕ.

25 градус сивĕ. Ĕнерхи хыççăн кăмăл аван. Çитменнине сĕтел çинче те çимеллисем юлнă. Хăçан çапла кашни кун сĕтел тулăх пулĕ-ши?

### Январĕн 2-мĕшĕ.

Урамри 27 градус сивве пăхмасăр лавккасенче фотоаппарат валли пленка шыраса çӳрерĕм. Усси пулмарĕ, ниçта та тупаймарăм. Ишĕлчĕк çуртсене ӳкерсе илесшĕнччĕ... Пулмарĕ.

### Январĕн 3-мĕшĕ.

Çутă çук. Шкулти Çĕнĕ çул уяв каçне 7-мĕш числона куçарчĕç. Аппа чирлерĕ. Уншăн питĕ пăшăрханатпăр. Тем курасси пур. Ăна лайăххах çитерме тăрăшатпăр. Хулара çăкăр çук. Лавккари сентресем те пуш-пушах.

### Январĕн 4-мĕшĕ.

Паян 400 грамм çăнăхран анне икерчĕ пĕçерчĕ. Ăна шĕвĕ яшкапа сыпса çирĕмĕр. Аппан сывлăхĕ лайăхланчĕ, анчах атте вăйсăрланчĕ. Хулара çынсем вилсе пĕтеççĕ ахăртнех. Шыв, çутă çук. Трамвайсем çӳремеççĕ, юрлă çулсене никам та тасатмасть. Хулана питĕ пысăк пулăшу кирлĕ те...

### Январĕн 5-мĕшĕ.

Ăшăтрĕ. Кăнтăрла хула пăшал сассипе кĕрлесе çеç тăчĕ. Кăмăлсем пурин те сӳрĕк. Аппа каллех чире пула йывăрланса пычĕ. Аттен те ури çаплипех йывăр. Уншăн пăшăрханатпăр.

### Январĕн 6-мĕшĕ.

Кунĕпех килте. Ыран елка кунĕ. Мĕнле иртĕ-ши тахçантанпах кĕтнĕ уяв? Унчченхи пекех хаваслă пулаймасса пирĕнтен кашниех пĕлет...

### Январĕн 7-мĕшĕ.

Çутă пачĕç. Театрта Çĕнĕ çул уяв каçĕ иртрĕ. Артистсем начар вылярĕç. Ара, вĕсем те пирĕн пекех выçă-çке. Апат вăхăчĕ çитрĕ. Уяв сĕтелĕ аван. Шĕвĕ яшка, 50 грамм çăкăр, çӳхе котлет.

### Январĕн 8-мĕшĕ.

Атте хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕ. Владимир Петрович Шахин учитель выçăпа вилнĕ иккен... Тепĕр вĕрентекен те пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă-мĕн. Хăрушă! Хула тăрăх çăва еннелле умлă-хыçлăн тупăксем йăтаççĕ... Аттен те урисем сураççĕ, манăн та çавах...

### Январĕн 9-мĕшĕ.

Атте çапах 4 кило çăнăх илсе килчĕ. Урамра вара... Çынсем аран-аран урисене куçарса уткалаççĕ. Унта та кунта çын виллисем... Вĕсен урисенче пушмакĕсем те, пуçĕсенче тутăр та, çĕлĕксем те çук... Ку уйăха чăтса ирттерме çав тери йывăр пулать, анчах епле те пулин тӳсмелле...



# Пурăнас килет-ха...

Ахаль тетрадь. Кун пек тетраде ачасем хăйнеевĕр сочиненисем çыраççĕ е задача шутлаççĕ. Кунта вара пĕрремĕш страницăра: «Константин Васильевич Корниенко кун кĕнеки», – тесе çырнă. Хуплашкара вара вăрçă ахрăмĕ сăнланнă. Салтаксем фронта каяççĕ, танксем те хĕрӳ çапăçура.

Костя Корниенко... Çӳллех мар, хытанка та хура çӳçлĕ Донбасс арçын ачи.

– Костя шкула ир кайнă. Вăл çав тери йăрă ачаччĕ. Пĕр вырăнта ларма-тăма пĕлейменскер урокрах парта хушшинчен сиксе тăнă та: «Эпĕ кайрăм!» – тесе класран чупса тухнă. Хăй вара лайăх вĕренетчĕ. Питĕ нумай кĕнеке вуланăран тем те пĕлетчĕ, – аса илнĕ Костьăн пиччĕшĕ пĕррехинче.

Шкулта пĕр мероприяти те Костьăсăр иртмен. Хастарлăхне кура пĕрле вĕренекенсем ăна старостăна суйланă. Стена хаçачĕ кăларас ĕçре те палăрнă. Кун хыççăн «Пионерская правда» хаçатпа та тачă çыхăну тытнă. Çавăн пекех техникăна, музыкăна чунтан кăмăлланă. Пурнăçа тата Тăван çĕршыва чунтан чĕререн юратнă.

Пăрахут тăвас ĕмĕтпе пурăннăскер шкултан вĕренсе тухсан аслă шкула вĕренме кĕме тĕллев тытнă.

– Пурнăç пĕрре килет. Ăна тивĕçлĕ пурăнса ирттересчĕ, – тенĕ вăл хастаррăн.

Троицко-Харцызск поселокĕнчи «Тăван çĕршывшăн» ятлă партизан отрядĕнчи Костя Корниенкона 1943 çулхи мартăн 11-мĕшĕнче ирхине персе вĕлернĕ.

Çав кун хитре хĕвеллĕ те ăшă кун пулнă. Типсе пыракан çĕр тата кăчкă кăларма пуçăннă йывăçсен тутлă шăрши сăмсана кăтăкланă. Костя çулпа хăюллăн утса «Катюша» юрра шăрантарнă. Çул урлă каçакан картлă кĕвентеллĕ кӳршĕне курсан сасартăках тăп! чарăннă.

– Аппаçăм, мĕншĕн-ха эсĕ пушă витресемпе? – тесе шӳтлеме вăй-хăват та тупнă.

Нимĕç ăна пăшалĕпе тĕртнĕ. Малалла утма хистенĕ.

Костя укăлча хапхи тĕлне çитсен:

– Урăх таçталла илсе ан кайăр. Кунта лайăхрах пулать, – тенĕ ним пулман пекех.

...Ăна çавăнтах пытарнă. Вилтăприйĕ çине чечексем лартнă. Кун кĕнекийĕ вара юлнă.

**«Январĕн 5-мĕшĕ.** Каçхине. Пĕчченех ларатăп. Çыратăп... Ирхине нумайтарах çывăрнă. Апатлантăмăр. Васьăпа Шурăна кĕтсе илтĕм. Пĕрле «генератор» пуçтартăмăр. Мĕнле «генератор» пулнине сире каярах каласа парăп... Чылайччен ĕçлеме тиврĕ. Мĕнех, эпир ĕçрен хăракан йышшисемех мар-ха...»

**«Январĕн 7-мĕшĕ.** Килте тунсăх. Полици килсе ухтару тумалла иккен. Вĕсене каçхи сакăр сехетчен кĕтрĕм. Килмерĕç. Кӳршĕсем патне каçса килтĕм...»

**«Январĕн 9-мĕшĕ.** Полици патĕнче допросра пултăм. Алăка шаккарăм.

– Кĕме юратчĕ-ши?

– Паллах. Хушамату мĕнле-ха?

Ыйту хыççăн ыйту. Сĕтел çинче наганпа патронсем выртаççĕ. Ман умра полици пуçлăхĕ. Çурăмĕ хыçĕнче – винтовка. Хĕсĕк куçлăскер ман çине пăхса йăл кулать.

**«Январĕн 13-мĕшĕ.** Кивĕ стильпе ыран Çĕнĕ çул. Иккĕмĕш хут ман пата полици килнĕ. Эпĕ килте пулманран хăйсем патне пыма хушнă. Уявра мана патакпах саламламĕç-ши?»

**«Январĕн 16-мĕшĕ.** Темле тĕлĕкпе аташса выртнă... Пăтранчăк шывра ишетĕп, юнашарах çĕленсем... Сăхмарĕç. Анчах асăрханатăп...»

**«Февралĕн 2-мĕшĕ.** Килте ухтару пулнă. Ешчĕк айĕнчи кун кĕнеки темле майпа сыхланса юлнă. Тыткăнри çынсене нимĕçсем плотинана аслăлатнă çĕре илсе тухса ĕçлеттереççĕ. Эпĕ те 3 кун вăй хутăм, кайран алă ыратать тесе суйрăм та урăх ĕçлемерĕм...»

**«Февралĕн 8-мĕшĕ.** Ял тавралла темчченех взрыв кĕрлерĕ. Кунĕпех совет самолечĕсем нимĕçсене аякка хăваларĕç...»

**«Февралĕн 17-мĕшĕ.** Кунĕпех ура çинче пултăм. Урамра сĕлкĕш. Ăшă. Çуркуннехи кун пек... Нумай çырас килет, анчах пĕлетĕп, хăрушă. Халĕ çыратăп та-ха, тен, ыран эпĕ çак çĕр çинче пулмастăп. Кам пĕлет. Çапах вилес килмест. Ара, Тăван çĕршывшăн хальлехе ытлашши нумай ĕç туса хăварайман-ха».

Çак йĕркесене çырнă хыççăн Костьăна пĕр кун иртсен арестленĕ. Ара, арçын ача питĕ нумай сиен кӳнĕ-çке фашистсене. Листовкăсем салатнă, нимĕç салтакĕсене путлантарнă, отряда хĕç-пăшалпа тивĕçтернĕ... Хăйне арестлеме пынă чухне те ыттисен пурнăçĕшĕн пăшăрханнă. Пӳлĕме фашистсем сирпĕнсе кĕрсен, Костя каштара çакăнса тăракан япалана туртса илнĕ те партизан отрячĕн боецне хупласа тартма ĕлкĕрнĕ.

Грузи халăх артисчĕшĕн Михаил Туманишвилишĕн те ырă ĕç тунă вăл. Ăна арçын ача тыткăнран тарма пулăшнă, кайран хăйĕн сад пахчинче пытарса усранă.

– Костик Корниенкона ĕмĕр манмăп, ырă чĕреллĕскер хăйĕн кĕске пурнăçĕнче кама кăна пулăшман-ши? Пĕррехинче уйра листовка тупнă та тӳрех ман пата ӳплене чупса çитрĕ. Унтан килĕнчен тетрадьсемпе кăранташсем кайса илчĕ те тытăнтăмăр ĕçе! Эпир те икĕ кунта 200-е яхăн листовка хатĕрлерĕмĕр. Унтан ăна салатма йăтса кайрĕ... Хăй юлташĕсем пирки те пăшăрханатчĕ вăл. Пĕррехинче, хăй каласа панă тăрăх, тусĕсемпе 20 фашиста путарнă вĕсем. Картишĕнчи нимĕçсенчен пытанмалли вырăна кăтартрĕ пĕр кунхине. Унта хĕçпăшалсене курсан вĕсене ăçтан тупнине ыйтрăм. Вăл вара пӳрнисемпе пĕлĕтелле тĕллерĕ те хавассăн йăл кулчĕ.

Костик пек паттăрсене ылтăнран палăк лартмалла. Вăл Тăван çĕршывăн чăн-чăн паттăрĕ пулса юлчĕ-çке. Нихăçан та ăна каппайланса кăкăр çапса çӳренине курман. Сăпайлă та вăр-варскерччĕ вăл. Ĕмĕтленме, ай, мĕн тери юрататчĕ! «Пĕлетĕп, вăрçă чарăнсан çак çĕр çинче мĕн тери илемлĕ пурнăç пуçланать», – тетчĕ тавралла тинкерсе. Шел, çав куна кĕтсе илеймерĕ, – тенĕ Грузи артисчĕ ассăн сывласа.



Элиза ВАЛАНС (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.

# Сăмах илемне туйсан...

Вениамин ТИМАКОВ

(сăвă çырма вĕренекенсене пулăшма)

## Сăмах вăл — асамлăх

*Аслă Хусанкайăмăрăн 1968 çулта çырнă «Элкере» сăвви тĕлĕнмелле хăватлă, чуна хĕмлентерекен йĕркесемпе вĕçленет:*

**Йĕри-тавра /эпир кĕтетпĕр/**
**Çĕкленĕç çĕнĕ ăстасем.**
**Çĕр пин сăмахлă вут чĕлхемĕр**
**Çиçтерĕ вĕçĕмсĕр хĕлхем.**

**Çакна шанми пулсан, кăвак пăр**
**Пулса пăрлантăр ман чĕре!**
**Яшсем! Сире шанса каятпăр,**
**Çитерĕр ĕмĕтĕмĕре!**

*Тĕрĕсех: эпир кунта кайма килетпĕр, элчелĕмĕр çитсен – каятпăр...*

*Анчах та эпир шанса каятпăр! Сире, яшсем, шанса каятпăр!..*

*Шăпах чăваш яш-кĕрĕмне шанни /Петĕр Хусанкай пек, Çемен Элкер пек, Митта Васлейĕ пек, Геннадий Айхи пек шанни/, ăна чунтан юратни тата пĕтĕм чĕререн ырă сунни хистенĕ те, ман шутпа, иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче пĕр вăхăтрах питĕ сăпайлă та йăваш, тӳрĕ кăмăллă та питĕ хăюллă, пĕтĕм пурнăçне тăван литературăна халалланă Вениамин Тимакова /1940-2002 çç./ «Сăмах илемне туйсан...» кĕнеке çырмашкăн.*

*Çак тĕлĕнтермĕш кĕнекен, 1980 çулта Чăваш кĕнеке издательствинче кун çути курнăскерĕн, пĕр экземплярĕ ман килĕмри библиотекăра упранать. Унăн пĕрремĕш страницинче Вениамин Петрович хăйĕн аллипе çакнашкал çырса хуни пур: «Çилçунат» членĕсене чун-чĕререн хисеплесе, литературăра пысăк çитĕнӳсем сунса – В.Тимаков. 20.12.80 ç.».*

*Мĕншĕн «Çилçунат» членĕсене халалланă кĕнеке ман килĕмре упранать-ши? Хуравĕ ансат: ун чухне эпĕ, 19 çулхи йĕкĕт, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи студентсен «Çилçунат» пĕрлешĕвне ертсе пыраттăмччĕ /хисеплĕрен те хисеплĕ вĕрентекенĕмĕр Виталий Станъял пилленипе/. Вениамин Тимаковпа иттернĕ тĕлпулăва та, тĕпрен илсен, ун чухне хамах йĕркеленĕ, паллах.*

* * *

*Поэзи!.. Вăл пĕрре пăхма кăна – ансат. Тĕрĕссипе вара вăл Тĕнче Уçлăхĕ пек аслă та кăткăс, çурхи хĕвел пек çутă та вĕри, шăпчăк юрри пек илĕртӳллĕ.*

*Тата Поэзи вăл – Вăрттăнлăх. Ара çав сăмахсемех, вĕсене пĕлсе те кирлĕ пек вырнаçтарсан, пач урăхла янăраççĕ, сăвă е поэма пулса тăраççĕ.*

*Мĕншĕн пĕр ĕмĕр ытла тыткăнлать пирĕн чĕремĕрсене вилĕмсĕр «Нарспи» поэма? Мĕншĕн кунсерен аса илсе хавхаланатпăр эпир Çеçпĕлпе Митта, Хусанкайпа Элкер сăввисене?..*

*Вăрттăнлăх-и? Вăрттăнлăх.*

* * *

*Вениамин Тимаковăн «Сăмах илемне туйсан...» кĕнеки 35 çул каярах кун çути курнă. Пĕртте иккĕленместĕп: ку тарана çитиччен унпа нумай çын паллашнă, усă курнă, ăна хавхаланса тĕпченĕ. Çапах та вăхăт хăйĕннех тăвать: кĕнекесене тепĕр чух лавккасенче туянма çеç мар, библиотекăсенче те тупса вулама май çук.*

*Акă мĕншĕн эпир «Тантăш» хаçатра кăçал В.Тимаковăн «Сăмах илемне туйсан...» кĕнекине, кăштах кĕскетсе, паллах, тепĕр хут пичетлес терĕмĕр. Ку вăл эпир пурсăмăр та Раççейре Литература çулталăкне, Чăваш Енре К.В.Иванов çуралнăранпа 125 çул çитнине анлăн паллă тунипе те çыхăннă. Кунсăр пуçне кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕнче пирĕн асран кайми ырă çыннăмăр Вениамин Петрович Тимаков пуранна пулсан 75 çул тултаратчĕ...*

*«Сăмах илемне туйсан...» кĕнеке – Вениамин Тимаков чăваш яш-кĕрĕмне парнеленĕ чаплă парне, хăйĕн валли хăй аллипе лартнă нихăçан та кивелмен палăк.*

***Валери ТУРКАЙ.***




## Илтĕм шурă хут

**/Умсăмах вырăнне/**

Сăвă çырма юратакан ача акă пĕр тетрадь сăвă çырса тултарчĕ. Хăйĕн шухăш-туйăмне çынсене уççăнрах пĕлтерес тесе чылай тăрăшрĕ вăл. Самаях аппаланса ларнă хыççăн хăй мĕн çырнине ыттисене вулаттарма шутларĕ.

Пĕрле вĕренекен юлташĕсем те, унччен сăвă çырса курнă çынсем те паллашрĕç унăн ĕçĕпе. «Сăвăсем пекех туйăнаççĕ кусем, анчах темшĕн йывăррăн вуланаççĕ», – тет пĕри. «Шухăшĕ пур, чĕлхи вара питĕ чухăн», – тет иккĕмĕшĕ. «Ку тетрадьре темĕнле тема та пур, анчах поэзи сахал-ха», – хаклать виççĕмĕшĕ, пĕлекенреххи.

Шалтах аптрарĕ сăвăç пулма шухăшланă çын. «Темиçе уйăх лартăм вĕт-ха аппаланса, нивушлĕ пĕр йĕркеллĕ сăвă та çыраймарăм? Пур-ши, çук-ши ман пултарулăх? Хăвăртрах пĕлесчĕ. Паян виçĕ сăвă çырас, ыран, тен, тăваттă... Вĕсенчен хăшĕ те пулин чипер сăвă пулатех ĕнтĕ...»

Ку çамрăка, паллах, пулăшу кирлĕ. Литературăна ăнланакан пĕр-пĕр çыннăн ăна сăвă çырнă чухне йĕркесене мĕнле тытса пырассине тĕплĕн ăнлантармалла. Çамрăкра чăнах та пултарулăхпа тăрăшулăх пур пулсан, ăна хавхалантарсах тăмалла.

Пултарулăхне ăнăçлă аталантарасси чи малтан авторĕнчен хăйĕнчен нумай килет. Аслă юлташĕсемпе литераторсен пулăшăвĕ те кунта пысăк пĕлтерĕшлĕ.

«Илтĕм шур хут, лартăм сĕтел хушшине...», – тесе çырнă вунпилĕк çулти Хусанкай. Шухăша епле витĕмлĕрех, кĕвве епле çепĕçрех каласси пулас поэта канăç паман.

Çапла, поэзи çулĕпе утма шухăш тытнă кашни çамрăка кун пирки кунĕнçĕрĕн шухăшлама тивет. Ку ĕçре тăрмашни кăна çителĕксĕр. Ытларах вĕренме, пĕлме, вĕренсе мĕн пĕлнипе ĕçре усă курма тăрăшмалла.

Хăшпĕр чухне çамрăк автор çыратьçырать те, иккĕленсе, çухалса каять: поэзи ăна пит йывăр япалах та мар пек, пушă вăхăта киленчĕклĕн иртермелли ĕç пек туйăннăччĕ. Анчах апла мар иккен. Çын чун-чĕрине хускатмалли çĕнĕлле йĕркесем çăмăлах пулса тухмаççĕ-мĕн. Пĕр йĕркенех тепĕр чух вунă-вунпилĕк хутчен çырма та тивет. Ку ĕç вара йăлăхтармаллипех йăлăхтарса çитерет. Апла пулсассăн, сăвă çырасси вăл – тăрăшуллисен, тӳсĕмлисен, пултаруллисен ĕçĕ.

Ку кĕнекере сăвă тытăмĕпе кĕвви пирки сăмах пырать. Поэзи тĕнчи асамлă, нумай енлĕ, илемлĕ. Автор вулакансене унта çулçӳреве илсе каясшăн, унти кĕвĕсемпе сăрсен илемлĕхĕпе паллаштарасшăн. Паллашăвăн пĕрремĕш пайĕ вăл – «Сăвă çырмалли правилăсем». Силлабо-тоника, тоника, рифма, строфа, ритм нумай енлĕхĕсене лайăх вĕренсе пыни çамрăк автора малашнехи ĕçре пысăк пулăшу парать.

Силлабо-тоникăпа е тоникăпа çырни, рифмăсене, строфана, ритма тĕрĕс тытса пыни вăл сăвва формипе кĕвви тĕлĕшĕнчен йĕркелени кăна. Анчах та сăмахсене чăн-чăн витĕмлĕх, сăнарлăх кӳрес тесен, çамрăк авторăн чĕлхе пиçĕлĕхĕшĕн пайтах тăрăшмалла. Кĕнекен «Сăнарлăхпа витĕмлĕх» пайĕнче ку тĕлĕшпе тĕрлĕ сĕнӳсем панă.

Мĕнле кăна произведени илемлетмест пуль, пуянлатмасть пуль поэзи тĕнчине! Пысăк калăплă произведенисем те, пĕчĕккисем те, «вĕтшакăрсем» те пур унта. Тĕрлĕ енлĕн, тĕрлĕ тĕслĕн çуталаççĕ вĕсем поэзи хирĕнче. Тĕрлĕ халăх ăс-хакăлĕ шухăшласа кăларнă вĕсене. Хăшĕ-пĕрисем пиншер çул пурăнаççĕ ĕнтĕ. Теприсем çурални пĕр ĕмĕр, çур ĕмĕр кăнаха. Виççĕмĕшĕсем вара... халь кăна аталанса пыраççĕ. Вĕсем пирки «Поэзи пайĕсемпе вĕсен формисем» пайра каланă.

Юлашки пайра поэт гражданлăхĕ пирки сăмах хускатнă.

Паллах, нимĕнле кĕнеке те сăвă çырма пуçланă çынна тӳрех поэт туса хураймасть. Кунта чи кирли – автор хăй ăнтăлни, тăрăшни, ыттисенчен çине тăрса вĕренсе пыни, пурнăçа сăнани, тĕпчени. Çак туртăма аталантарма, вăйлатма пулăштăрччĕ тесен çырнă çакă кĕнекене автор.

Шкулти литература кружокĕсене ертсе пыракансене те сĕнесшĕн эпир ку кĕнекене. Кашни сыпăкне пĕрер занятире тимлĕн сӳтсе явса, ачасене ĕç хушса ярсан, пирĕн шухăшпа, кружок ĕçĕсем те тухăçлăрах иртĕç.

«Илтĕм шурă хут...» Апла пулсассăн, ăна чĕрĕ, илемлĕ, тарăн шухăшлă, хитре кĕвĕллĕ йĕркесемпе кăна тултарма тăрăш, çамрăк тусăм.

***АВТОР.***

### Юратнă чĕрчун

Пур килте ман пĕр кушак,
Сарă тĕслĕ-çке вăл ак.
Сĕт ĕçме пит юратать,
Манпа вылять, шăши тытать.
Унăн çурисем те пур –
Тăват пĕчĕкçĕ маттур.



Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ӳкерчĕкĕ.

### Пулăпах десантник

Пире хӳтĕлет
Танкпа вертолет.
Карапĕ ишет,
Вĕçет самолет.

Пирĕн çĕршыва
Тăшмансем килмеççĕ –
Салтаксем çапла
Лайăх хӳтĕлеççĕ.

Пулăпах десантник
Эпĕ те ӳссессĕн.
Салтак эп пулатăп
Вĕренӳ пĕтсессĕн.

***Алексей ПОРФИРЬЕВ.***

Вăрмар районĕ,
Кĕлкеш шкулĕ.

### Анне

Юратап темен сана, аннеçĕм.
Пĕчĕк чух вăтаннă, хăяйман.
Пулăшмашкăн тăрăшаттăм. Ĕçĕм
Ман, тен, çур пуса та тăрайман.

Сăрламан урай çума тăрсассăн
Кĕрейместчĕ мунчала алла.
Тасалман пулсан та, сăтăрсассăн
Кăшт тусанĕ кайнă пулмалла.

Сахал мар ача сăпки сиктернĕ
Кăнтăрла е, кирлĕ чух, çĕрле.
Кипкине те типĕтнĕ, çитернĕ,
Тарăхсассăн йĕнĕ те пĕрле.



Кристина ВАСИЛЬЕВА (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) ӳкерчĕкĕ.

Шыв витри пулсан та пĕчĕкçеççĕ
Эхлетсе, кана-кана хутлан –
Хĕпĕртенĕ уншăн та аннеçĕм
«Юрататăп» тенинчен ытла.

Савăнтарнă эп илсессĕн «пиллĕк»,
Шухăшлатăп лайăх вĕренме.
«Ачасем ан пулччăр тӳрĕ пилĕк», –
Çапларах шутлатăн эс, анне.

Юратап темен сана, аннеçĕм.
Вăтанатăп халĕ те, анне.
Куçусем, ав, ăшшăн тинкереççĕ,
Ăнланасшăн мĕн каласшăнне.

Маншăн ан кулян, аннем, пĕрре те.
Шухăшпа эс ыйхуна ан тат.
Эс вĕрентнĕ чăнлăха пĕлетĕп:
«Ĕçре çеç тупать çын ырă ят!»

***Катя НИКОЛАЕВА.***

Çĕрпӳ районĕ,
Опытнăй шкулĕ.

### Поэт

Поэт ахах пекех паха.
Чăвашсене вăл панă шанăç.
Çутта вăл туртнă халăха.
Ăна çынсем нихçан та манмĕç.

Кун-çулĕ пулнă ун кĕске,
Çапах вăл халăх чĕринче.
Вăл тăрăшни сая каймарĕ.
Çук, сӳнмĕ ун чĕри кăварĕ.

Вăл пирĕн вилĕмсĕр поэт.
Вăл пирĕн аслă çĕнтерӳ.
Ан манăр унăн тивлетне.
Вăл пултăр чаплă мухтану!

***Виолетта АНИФЕРОВА.***

Çĕрпӳ районĕ,
Опытнăй шкулĕ.

### Тăван ял

Епле хитре-çке эсĕ, тăван ялăм!
Телей вăл – эс пурри çак тĕнчере.
Урамусем хăй евĕр сан, çырмаллă.
Эс пуртанах хаваслă ман чĕре.

Тăван ялăм тухать куç умне:
Мĕнле ырă, илемлĕ тĕнче.
Илĕртеççĕ куçа çĕн çуртсем,
Пурăнаççĕ кунта хастарсем.

Тăван ялăм ӳсет кунсерен,
Йăмрисем пит хитре те ĕлккен.
Пĕр-пĕрне сума-сăвар,
Савăнса çеç пурăнар.

Юратнă ял, çуралнă килĕм,
Ялан эс пулăн асăмра.
Сирĕн умра, атте-аннемĕр,
Ĕмĕр-ĕмĕр парăмра.

Пурăнаççĕ хастар ĕçченсем
Пулăшса пĕр-пĕрне ĕçсенче.
Кунти паллă çынсен ячĕсем
Упранаççĕ вĕсен чĕринче.



Яна БАКИНА (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Хуракасси) ӳкерчĕкĕ.

### Ан пултăр вăрçă нихăçан!

Ват асатте ман таврăнман фронтран,
Смоленск таврашĕнче вăл вилнĕ.
Ват асанне патне кайран
Киле пичетлĕ хут çеç килнĕ.

Аçусăр тăлăх ӳснĕскер
Эс вăрçă мĕскерне пĕлетĕн.
Асап та хурлăх курнăскер:
«Ан пултăр вăрçă урăх», – тетĕн.

Эс çитĕнтĕн, эс ӳсрĕн, тав Турра.
Анчах та кураймарăн аçуна.
Халь юнлă çырусем кăна
Тытса вулатăн хурланса.

Ват асанне çунса чĕрипеле,
Ах, вăхăтсăр çӳçне шуратрĕ.
Вĕсен сăваплă ячĕпеле
Калатăп: «Тек ан пултăр вăрçă!»

***Елена СЕРГЕЕВА.***

Муркаш районĕ,
Шетмĕпуç шкулĕ.

### Пирĕн урамра

Тăван ял, тăван ял,
Эсĕ пит хитре.
Хаклă ял, савнă ял –
Кулă сăн-питре.

Пирĕн урамра
Çӳпĕ-çапă çук.
Çавăнпа умра
Савăнать Наçтук.

Манăн ялăмра
Йывăçсем нумай.
Çыннисем вара
Савнăçпа пĕрмай.

Хĕвел яланах
Ăшшăн çеç пăхать,
Пирĕн урама
Вăл илем парать.

***Розмарина ВАСИЛЬЕВА.***

Муркаш районĕ,
Шетмĕпуç шкулĕ.

### Чакмастпăр каялла

«Ан пултăр вăрçă нихăçан», –
Тесе калать кашни ялан.
Нумаййăн вилнĕ вăрçăра,
Ялсем те юлнă çап-çара.

Вĕсем çĕр айĕнче выртаççĕ,
Анчах нихçан та манăçмаççĕ.
Тăшмансем кăна кулаççĕ –
Пирĕн çынсем тупăшаççĕ.

Эпир пурпĕр парăнмастпăр,
Хамăр çĕршыва памастпăр.
Эпир чакмастпăр каялла,
Пирĕн паттăр пулмалла!

***Анатолий ЧЕЛЯБИН.***

Муркаш районĕ,
Шетмĕпуç шкулĕ.

● **АСЛИСЕН САССИ**

### Юнашар, курап, пуласлăх

Йăл кулса тĕнче вăранчĕ.
Таврара чечек, ялав.
Ман çĕршыв юрри шăранчĕ.
Çĕр çинче паян уяв.

Урамра ман халăх хумĕ
Тӳпене çĕклет чуна.
Пин-пин тĕслĕ унăн тумĕ,
Пинĕпе яштак хунав.

Çуркунне утать хаваслăн.
Мир, Ĕçлев, Телей пĕрле.
Юнашар, курап, пуласлăх
Ĕмĕтпе вĕрет, кĕрлет.

### Ман салтак, Раççей салтакĕ

Тĕрлĕрен тăрать çанталăк:
Сивĕ, çумăр, çавраçил.
Куç хупмасть Раççей салтакĕ,
Мирлĕ пурнăç хуралçи.

Вăл сыхлать… Пуласлăх кантăр
Канлĕн тутлă ыйхăпа.
Нихăçан ан нушалантăр
Выçлăхпа та хуйхăпа.

Кăвак пĕлĕт ĕмĕр пултăр
Янкăр, тăрă тӳпере.
Хĕвел маншăн, саншăн култăр
Ăшăтса тăван çĕре.

Йывăç-курăк чечеклентĕр,
Тыр кашлатăр уй-хирте.
Пурлăхпа çĕршыв килентĕр.
Ĕçпе ирĕклĕх пирте.

Шăпчăк юрă кĕвĕлетĕр
Юрату çинчен ялан.
Ман Тăван çĕршыв кĕрлетĕр
Иксĕлми хăватпалан.

Хăнасем анне пуçтартăр
Ăраскаллă ĕмĕтпе.
Тулăх пурнăç савăнтартăр,
Хĕпĕртетĕр ачсемпе.

Итлесем, тĕнче, пур халăх,
Вăрçăпа тек выляр мар.
Ĕçпе миршĕн пултăр палăк.
Ку пуриншĕн пархатар.

Ман салтак, Раççей салтакĕ,
Куç ан ил тăшман çинчен.
Иртĕхсен – унне çул тат эс.
Лăпкă пултăр çĕр çинче.




Арсений СЫНКОВ (Сĕнтĕрвăрри районĕ, Хуракасси) ӳкерчĕкĕ.

### Çухатрăм пуль яланлăхах...

Асамлă вăй ачалăха
Парнелесен вăхăтлăха
Ларасчĕ ман анне çумне,
Итлесчĕ ун ăш сăмахне.

Курасчĕ тус-юлташсене,
Вылясчĕ чун каниччченех.
Юмах ярасчĕ киленме,
Шкула каясчĕ вĕренме.

Хĕлле ярнасчĕ йĕлтĕрпе,
Çунашкапа е конькипе.
Юр ирĕлсе çерем тухсан
Чупасчĕ ачсемпе çарран.

Асамлă вăй çамрăклăха
Парне тусан вăхăтлăха
Аннен ăшран тухан пилне
Илтесчĕ ман çине-çине.

Пуласчĕ хам тантăшсемпе,
Сăмах вакласчĕ вĕсемпе.
Юрлас, ташласчĕ çĕрĕпе
Нихçан манми яш-кĕрĕмпе.

Çуласчĕ утă улăхра,
Пĕрле ларасчĕ улахра.
Лаша пăхасчĕ выртмара,
Татах ĕçлесчĕ заводра.

Ачалăхпа çамрăклăха
Çухатрăм пуль яланлăхах.
Аса илсе çеç йăпанам,
Чун-чĕрене хăват хушам.

***Вячеслав МИХАЙЛОВ.***

Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм.

# Ача-пăча театрĕсене

Ирина тата Ян ЗЛАТОПОЛЬСКИСЕМ



## Пĕчĕк çеç Хурчка

**(Вăрçăран çитнĕ çыру)**

**Икĕ пайлă пьеса-юмах**

***Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ Геннадий КИРИЛЛОВ куçарнă.***

***(Малалли. Пуçламăшĕ 22-23-мĕш номерсенче).***

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Манăн унта ларма юрамасть! Манăн вĕçмелле! Ман çынна çăлмалла-çке, Кинемей! Эпĕ вĕçсе çитеймесен, вăл вилет. Пулăшсам!

МУЧИ. Карчамас... Çилĕм çук та-ха, анчах ăна хатĕрлеме пулать. Э-э?

КИНЕМИ. Эппин çăнăх миххине силле-ха.

МУЧИ. Кăштах шыв, кăштах çăнăх – çулĕ пултăр ăнăçлах!

*Ватăсем Пĕчĕк çеç Хурчка умне пĕшкĕннĕ, унăн çунаттине сиплеççĕ.*

МУЧИ. Ну, маттур та иккен эсĕ, Карчамас. Аванах пулса тухрĕ!..

КИНЕМИ. Фронтра Пĕчĕк çеç Хурчка Хумккапа Çумккана, Петĕрпе Хветĕре тĕл пулĕ. Лешсем вара ун çуначĕ çине пăхсанах манăн ĕçе аса илĕç. Пирĕн кукамай те сывă! – тесе мĕнлерех савăнĕç!

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Кинеми, вĕсем сирĕн мăнукăрсем-и?

МУЧИ. Тĕрĕсех, мăнукăмăрсем. Пурте пĕр пек хушаматлă – рядовой Потаповсем... */Ассăн сывлать/*. Мĕнле-ши вĕсем унта?..

*Вăт, çак ĕç те вĕçленчĕ. Мучи аллине Пĕчĕк çеç Хурчкана тытса тӳрленсе тăчĕ, ĕçĕпе киленчĕ. Нимĕнле суран та пулман тейĕн. Пĕр хутчен сулчĕ хăйĕн çуначĕсене Пĕчĕк çеç Хурчка, унтан тепре – пӳртĕн лутра маччи айĕпе çаврăнса та илчĕ.*

МУЧИ. Ну, мĕнех, пĕчĕкскерĕм? Халĕ ĕнтĕ – чӳречерен тӳпенелле ярăнсам!

КИНЕМИ. Çав анчăксенчен кăна сыхлан...

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Тавах сире! Тавах! Ирхине мана партизансем çăлчĕç, халĕ – эсир... Сывă пулăр! */Пӳртре çук та вăл – чӳречерен вĕçсе тухрĕ/.*

*Пӳрт алăкне вара чĕрнеллĕ алăсем чăрмалама тытăннă. Йытăсемсĕр унта мĕнле вăрттăнлăх пултăр? Мĕншĕн тата алăка питĕрнĕ?!*

КИНЕМИ. Килсе çитрĕç, ылханлăскерсем... */Тарăхнипе сурать те усалсене ятласа/.* Ах, йăлăхтарса çитерчĕ-çке çакăн пек вĕрнипе хăраса чĕтреме!.. А-а, мĕнех, Старик, илтрĕн-и? Партизансем аякрах та мар иккен. Тен, хамăрăн икĕ çатмапа икĕ кашăка хăварса вĕсене шырама вăрмана кайăпăр?.. Эсĕ партизансем валли вутă çурăн, эпĕ – пăтă пĕçерĕп. Э-э?

МУЧИ */кулса/*. Сĕре кирлĕ эпир партизансене!

*Кинеми кӳреннипе çаврăнса ларать, кичемленет. Мучи çав хушăра арчине уçать те унтан хăйне тата Кинеми валли икĕ мăшăр çĕнĕ çăпата кăларать.*

МУЧИ. Мĕн кăмăлсăрлантăн тата? Акă, çĕннине сыр... вăрмана çитме çывăхах мар.

### Йытăсем

*Пĕчĕк çеç Хурчка васканă. Вăрçă вучĕ витĕр вĕçнĕ, хыпар пĕлтерме васканă...*

Юлашки утăм, юлашки сулăм,
пĕр туртăну!
Çитес çĕре çитме пултăр çеç тăну!
Çӳл тӳпе çулăмра, çĕр çунать,
Сирпĕнӳ шавĕ, фугас кĕрлевĕ,
вĕçет снаряд!
Енчен самант пулсассăн шăплăх,
Ан ман çакна: кунта вăрçă-чăтлăх:
Умăнта, уру айĕнче е пуçу çийĕн...
Лăпкăлăхра асăрхан – пуçна çийĕн.
Йывăр çулта çунатту ывăнсан
çăмăл мар,
Анчах эскадрилья кĕтет питĕ кирлĕ
хыпар.
Апла хăвăртрах, пĕчĕк тусăм,
Юлашки сулăм, пĕр туртăну...
утăм тусам!

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Тухăçалла! Тухăçалла! Хĕвел аниччен ĕлкĕресчĕ!..

*Унăн çуначĕ сиксе илчĕ те тӳрленчĕ. Унтан каллех чĕтренчĕ те йывăрланнăн туйăнчĕ. Çумăр тумламĕ пĕрин хыççăн тепри тумласа ун çунаттине йĕпетнĕ... Тĕксĕмленнĕ тӳпене сенкер çиçĕм çурса пăрахрĕ – аслати кĕрлерĕ. Ахаль аслати пулсан та вăл Пĕчĕк çеç Хурчкашăн вилĕмпе пĕрех пулма пултарать.*

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА */питĕ хăранипе/*. Çумăр! Эпĕ йĕп-йĕпе пулатăп! Вĕçсе çитейместĕп!.. Каллех! Каллех маншăн чарăну! Халĕ ĕнтĕ хӳтлĕх шырамалла та çумăр чарăнасса кĕтмелле. /Аялалла ансан/. Йĕпенес марччĕ!..

*Çеçенхирте пĕр çунса хуралнă йывăç ларать. Унăн çулçи те питĕ сахал, анчах та Пĕчĕк çеç Хурчкана хӳтĕленмелĕх çителĕклех. Пĕчĕк çеç Хурчка йывăçăн пĕр туратти айне вĕçсе кĕчĕ те çăмăллăн сывларĕ. Çунаттине тĕрĕслерĕ, ун çинчи çумăр тумламне сиплерĕ. Тинех вăл кунта аслатирен хăй кăна пытанманнине асăрхарĕ.*

*Йывăç айĕнчи çĕр çине икĕ пысăк нимĕç овчаркки тăсăлса выртнă. Хайхи лешсем, шăпах платформăра çӳренисем-и? Е пӳрт патĕнче пулнисем? Кам пĕлет вĕсене! Тен, çавсем, тен, урăххисем...*

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА. Ылханлă çумăр... Ылханлă çĕршыв, нимĕнле канăçлăх та çук... Партизансем апатçимĕç машинине сирпĕтнĕренпе виçĕ кун ĕнтĕ выçă паекпа пурăнатпăр...

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Манăн та хырăм пăкăртатать, ал-ура та хуçăк. Эпĕ пурпĕр нăйкăшмастăп! Таса юнлă овчаркăна ӳпкелешни килĕшмест.

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА. Ытлашши ан палка! Манран та таса юнлине шырамалла! Манăн несĕлсен çиччĕмĕш ăрăвĕ паллă!

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА /ун хутне кĕнĕ пек/. Нимех те мар, нимех те мар! Çав летчике тупатпăр та пирĕн те уяв пулать! Уншăн виçĕ кило какай пама пулчĕç. Шӳт мар!

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА. Иккĕ.

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Кайран виççĕ терĕç. Кăкарнинчен вĕçертнĕ чух... Мĕншĕн эсĕ илтмен? Таса юнлă овчаркăн хуçа мĕн каланине, унăн кашни сăмахне лайăх тимлемелле!

*Сывлама чарăнса Пĕчĕк çеç Хурчка аяларах вĕçсе ларчĕ. Итлет.*

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА */чĕлхине çулласа, куçне хупса/.* Виçĕ кило!.. Итле-ха, мĕн тунă вара çав летчик?

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Шăп! Ку вăрçă вăрттăнлăхĕ!.. Юрĕ. Калам ĕнтĕ. Хăрушă кайăк вăл. Пирĕн аэродром ăçтине асăрханă.

*Пĕчĕк çеç Хурчка çӳçенсе илчĕ, сисчӳленчĕ тата аяларах анса ларчĕ.*

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА. Эх, ку ылханлă çумăр!.. Чар-р-р-рăнми çумăр-р-р-р-р!..

Эпир тăван пек пулса çав какая пайлăпăр, юрать-и?.. Иртнинчи пек эсĕ пĕтĕмпех туртса илмĕн-и?.. Чĕр-р-р-рине парĕç, тин пуснине, юнлине! */Кăмăлтан куçне хĕсет/.*

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Çитет палкаса! Çумăр чарăнать!

*Çумăр чăнах та çума чарăнать, акă унăн юлашки тумламĕсем йывăç çулçисем çинчен ӳкеççĕ. Овчаркăсем сиксе тăчĕç – тарма хатĕр.*

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА. Ĕçе пикенер!.. Летчик çав вăрманта таçта пуласса манăн самса туять!

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Ан кайăр!

Команда пană чухнехи пек овчаркăсем пĕр харăс пуçĕсене çĕклерĕç, хăрăлтатса вĕрме пуçларĕç.

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Вăл вăрманта мар!.. Летчик ăçта пытаннине эпĕ пĕлетĕп!

**ИККĔМĔШ ПАЙĔ**

### Çил

*Пĕчĕк çеç Хурчка йытăсен пуçĕсен тăрринче, йывăçăн чи аялти турачĕ çине вĕçсе анса ларать. Çăлтăрсене асăрхасран аяла анмарĕ. Ĕненеççĕ-ши ăна е çукши? Ах, ĕненччĕр çеç, тем тавçăрса ан илччĕр кăна.*

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА */мăн кăмăллăн/.* Ку тата мĕн?.. Те хут татăкĕ, те тетте...

*Йытăсем Пĕчĕк çеç Хурчка еннелле шăршлаççĕ, нимле те вăл кам иккенне тавçăраймаççĕ.*

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Самолет пек... Анчах тем килĕшмест вăл мана...

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА */ĕçлĕн хыпкаланса/.* Летчик ăçтине пĕлетĕп, тетĕн-и?.. Апла, пире унта илсе кай! Хăвăртрах! Илсе кай, тетĕп!

*Пĕчĕк çеç Хурчка тапранма çунаттисене сулчĕ ĕнтĕ, анчах Иккĕмĕш овчарка васкамарĕ-ха.*

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Тăхта!.. Темĕн кунта апла мар!

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА */пăлханнипе сиккелесе илсе/.* Пĕлет-çке, пĕлет! Çĕрĕпе сулланса çӳреймĕпĕр! Тата тупаймасан... Кунта какай мар, саламат шăрши кĕрет!

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Шăп!.. */Пĕчĕк çеç Хурчкана питĕ тимлĕн сăнаса/*. Эпĕ кунта темĕн ăнланаймастăп-ха. Ăнлансан вара ĕненĕп... Пире хăть какай параççĕ. Эсĕ мĕн парасса кĕтен?

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА */пăлханса/*. Эпĕ?..

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА. Питех те ăнланмалла! Хут мĕнрен хăратăр?.. Çулăмран. Кунта вара йĕри-тавра вут-çулăм!.. Хăйĕн çунаттинчен пирĕн хуçа çакласасса ĕмĕтленет пуль-ха... Хе-хе... Тен, ун çине çыру çырса телейлĕ çĕрелле... Гер-р-р-рмание вĕçтерсе ярĕ!

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА */çилленсе/.* Эсир мĕн... */Темĕн аса илсе/.* Çапла... Çапла... Тĕрĕс!.. Эпĕ малта вĕçсе пырăп, эсир ман хыççăн! Часрах!

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Малалла!

*Тинех ăмăрту пуçланчĕ! Овчаркăсене илĕртсе, Пĕчĕк çеç Хурчка малалла вирхĕнчĕ, хăйĕн çунаттисене туймасăрах вĕçрĕ.*

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Ман хыççăн!.. Ман хыççăн! */Каялла çаврăнса пăхрĕ – ун хыççăн чупса пыраççĕ-и?/*

*Йытăсем Пĕчĕк çеç Хурчка хыççăн чупнă май сывлăша шăршлаççĕ, ăна куçран вĕçертмеççĕ. Пĕчĕк çеç Хурчка хăй ывăннине те манса кайрĕ. Йытăсем ун хыççăн юлма пуçларĕç.*

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Ан хăй мала кайма!

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Васкамалла!.. Часрах, часрах!

*Сăрă йытăсем Пĕчĕк çеç Хурчка хыççăн аран ĕлкĕрсе пыраççĕ, пурпĕрех чĕлхине кăларса, пӳлĕне-пӳлĕне сывласа лапăслатаççĕ.*

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА */Пĕчĕк çеç Хурчкана/*. Тăхта-ха, çапкаланчăк! Кун пек чупса пырса ура ыратакан пулчĕ!

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Ĕнтĕ çывăхрах! Çывăхрах!

*Анчăксем такăнса ӳкеççĕ, пуçхĕрлĕн çаврăнса илеççĕ, тăраççĕ те каллех чупаççĕ. Пĕчĕк çеç Хурчка вара каялла пăхкаласа вĕсене малалла... малалла илĕртнĕ.*

*Хĕвел питех те аялта пулнă. Пĕчĕк çеç Хурчка çапах та ĕлкĕрĕччĕ-ха, ĕлкĕрĕччĕ!..*

*Малта темиçе саслăн ӳлени илтĕнме пуçларĕ. Пĕчĕк çеç Хурчка тĕллев малта пулнине ăнланчĕ.*

ПĔЧĔК ÇЕÇ ХУРЧКА. Вăл çакăнта! Пĕрре сикмелле те! Ну...

*Йытăсем çиçĕм пек вирхĕнекен Пĕчĕк çеç Хурчка хыççăн чупрĕç. Юлашки самантра кăна, Çил хушăкĕ патне çитсе персе аниччен чарăнма ĕлкĕрчĕç. Аялалла пăхрĕç – унăн тĕпĕ курăнмасть!.. Унта тем ӳленĕ кăна тата тĕксĕм кăвак тĕтре кăна мăкăрланнă. Унта, аялта тĕнчери мĕнпур çил каннă.*

ИККĔМĔШ ОВЧАРКА. Ултав! Çил хушăкĕ!

ПĔРРЕМĔШ ОВЧАРКА /çухăрса/. Ултав! Вăл пире тĕпсĕр шăтăка улталаса илсе кĕресшĕнччĕ!

Пĕчĕк çеç Хурчка питĕ хытă ыратнă чухнехи пек йынăшса илчĕ. Ăнмарĕ. Ăнăçманнине ăнланчĕç!.. Çилленнипе овчаркăсем Пĕчĕк çеç Хурчкана чĕрнисемпе тата шăлĕсемпе çаклатас тесе сиккелерĕç... Пĕчĕк çеç Хурчка хăйĕн шанчăкне çухатмасăр, вĕсем çийĕн аялтанах çунаттисем çинчи çăлтăрĕсемпе илĕртсе вĕçе-вĕçе иртнĕ ... сăрă чĕрчунсене анратас тенĕ пекех. Тупăш çывăхрах – сăмса умĕнчех – пĕрре аялта, тепре çӳлте, унтан аяларах вĕçсе çӳрет.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

Çуллахи ăшă кунсенче ытларах çăмăл апат çиме тăрăшатпăр. Уйрăмах улма-çырларан, пахчаçимĕçрен янтăлани усăллă. Салата гарнир пек те хатĕрлеме май пур, ун чухне вăл мĕнле апатпа килĕшсе тăнине шута илмелле. Аш-какайран тăракан блюдăсем панулми, чие, ыхра, сухан, ешĕл çимĕç хушнă салатпа килĕшӳллĕ пулĕç. Пулăран хатĕрленĕ апат валли пĕçернĕ пахчаçимĕç /çĕрулми, кишĕр/ хушнă, лимон сĕткенĕпе е пăрăçпа тутлăлатни кирлĕ. Çуллахи салата пĕр-пĕринпе пĕрлештерме юраман çимĕçсене те кĕртме юрать, сăмахран пахчаçимĕçпе пĕрле кайăк-кĕшĕк какайĕ, макарон е пĕр-пĕр кĕрпе хурсан апат хăйне евĕрлĕ, тутлăрах пулать.

Улма-çырларан янтăланă салата десерт вырăнне лартма юрать. Ăна тĕрлĕ пылак соуспа, кремпа, йогуртпа е çăратнă сĕтпе пăтратсан аван. Темиçе тутлă салат рецепчĕпе сире те паллаштаратпăр.

## Маршмеллоу хушнă пылак салат

**Ăна валли 300 грамм çĕр çырли, 200 грамм мандарин, çур стакан ытла маршмеллоу /пĕчĕк зефир евĕр çемçе пылак çимĕç/, 2 банан кирлĕ.**



Шултăра татăксене каснă çырлапа банана, пайăркасене уйăрнă мандарина тата ытти çимĕçе тарăн савăта ярса пăтратмалла. Сивĕтмĕшре кăштах сивĕтнĕ хыççăн сĕтел çине лартма юрать.

## «Çулла» салат

**Салат валли пĕчĕк купăста пуçĕн çур пайĕ, 1 помидор, çур кĕленче консервланă кукуруза, кăштах симĕс сухан е петрушка, 4 апат кашăкĕ майонез, хăйма е хĕвелçаврăнăш çăвĕ, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Вĕтетнĕ купăстана тăвар хушса сĕткенĕ сăрхăнса тухиччен нимĕрлемелле. Помидора вĕтĕ тăваткаллаcа, симĕс сухана çӳхе ункăсене вакламалла. Кукуруза сĕткене сăрăхтармалла. Пĕтĕмпех пĕрлештермелле те тăвар, пăрăç майонез /хăйма, хĕвелçаврăнăш çăвĕ/ хушса пăтратмалла.

## Çăмăл салат

**Çимĕçе хатĕрлеме 1 хăяр, 2 помидор, 1 пуç сухан, хăвăра кирлĕ чухлĕ редис, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Вакланă çимĕçсене тăварпа, пăрăçпа, хĕвелçаврăнăш çăвĕпе пăтратăр. Салат хатĕр.

## Сельдерейпе хатĕрленĕ салат

**Ăна валли 2 сельдерей туни, 2 хăяр, 1 пылак пăрăç, çур кĕленче консервланă кукуруза, хăвăра кирлĕ чухлĕ салат çулçи, 2 кашăк майонез, хăйма, тăвар кирлĕ.**

Салат çулçине алăпа тата-тата ваклăр. Вĕтетнĕ хăярпа, пăрăçпа, сĕткенне сăрăхтарнă кукурузăпа пĕрлештерĕр те майонезпа тата хăймапа пăтратăр.

● ПĔЛМЕ

# Тимĕр ывăса мĕнле тасатмалла?

**Ку ыйту пур кил хуçине те пăшăрхантарать ахăртнех. Духовкăра аш-какай, кукăль-çăмах пĕçернĕ хыççăн противене чăнах та çуса тасатма йывăр. Уйрăмах тĕпне çунса ларнă, хура тĕс çапнă çуран нихăçан хăтăлма çук пек туйăнать.**



Тимĕр ывăса тасатас умĕн вăл мĕнле материалтан тăнине шута илмелле.

Силикон тата тефлон витнĕ противене сăмахран, çемçен çес сăтăрса çумалла. Çавăн пекех керамика, кантăк, эмаль савăта та асăрханса тасатмалла. Алюмини е тутăхман тимĕр ывăса ятарлă порошокпа та, тимĕр мунчалапа хырса çума юрать. Вĕсене сиен пулмĕ.

Силикон формăна супăнь хушнă ăшă шывпа, çемçе çĕтĕкпе сăтăрса çăвăр. Керамика, эмаль, кантăк противене ятарлă савăт-сапа çумалли шĕвек хушнă шыв ярса чылай вăхăт тытăр. Ку пулăшмарĕ пулсан ывăс тĕпне апат соди сапăр та вĕри шыв ярса хурăр. Çĕр каçа хăварăр. Çак вăхăтра апат соди вараланчăка ирĕлтерме тивĕç. Апат соди пулмасан горчица порошокĕпе те усă курма юрать. Ĕçе пурнăçланă чухне алла перчетке тăхăнма ан манăр.

Çирĕп материалтан тăракан ывăса тасатмашкăн пĕр сий тăвар сапăр та хĕртнĕ духовкăна лартса çур сехет тытăр. Тăвара хăмăр тĕс çапрĕ-тĕк ывăса кăларăр. Шывпа çăвăр.

Çунăкран водород перекисĕ тата апат соди пулăшнипе хăтăлма пулать. Асăннă япаласене пĕр пек виçепе хутăштарăр та противене сĕрĕр. Çур сехет е ытларах тытнă хыççăн хутăша хырса илĕр.

Противень тĕпне апат соди хушнă шыв ярса духовкăна лартса 10-15 минут вĕретни те çунса хытнă савăта тасатма пулăшать. Духовкăран кăларнă хыççăн ăна çемçе çĕтĕкпе çăвăр. Керамика е кантăк формăна сивĕнсен çеç çума юрать.

Тефлон витнĕ савăта тимĕр мунчалапа, порошокпа тасатма юраманнине асра тытăр. Апат пĕçернĕ хыççăн противеньре юлнă çуран хăтăлăр, апат-çимĕç юлашкисене пластик е йывăç кашăкпа хырса тасатăр. Хыççăн хулăн сийпе вĕтĕ тăвар сапса хурăр. 5 минутран противене пушатăр та типĕ салфеткăпа сăтăрăр. Унтан савăт-сапа çумалли гель хушнă вĕри шывпа, çемçе çĕтĕкпе çуса тасатăр. Ăшă шывпа чӳхенĕ хыççăн шăлса типĕтĕр.

Противене тасатма тăрăшса чылай вăхăт ирттерес темесен ăна çийĕнчех çуса хурăр. Е апат пĕçернĕ чухне тимĕр ывăс тĕпне ятарлă хут хурăр. Кун пек вăл вараланмĕ, кĕске вăхăтрах юрăхсăра та тухмĕ.

# *Усăллă редис*

Пахчара майĕпен хăш-пĕр çимĕçсем çитĕне те пуçларĕç ĕнтĕ. Вĕсенчен пĕри – редис. Тути йӳçĕ пулсан та вăл питĕ усăллă. Унра тĕрлĕ витамин – аскорбин йӳçекĕ, В ушкăнри витаминсем, С витамин, тимĕр, кали, антоциан, клетчатка тата ытти те – чылай.

Редис хуппи мĕн чухлĕ хĕрлĕрех, çавăн чухлĕ унра С витамин нумайрах, çакна шута илĕр. Асăннă çимĕçрен çуллахи тĕрлĕ салат хатĕрлеме пулать. Косметологире те унпа усă кураççĕ, ӳт валли тĕрлĕ маска хатĕрленĕ чухне хушаççĕ.

Ӳте шатра тухса тулчĕ-тĕк – организма В витамин çитмест. Кунне пĕр-икĕ редис çисен ку пăтăрмахран хăтăлма пулать. Редисри кали чĕрене лайăх ĕçлеттерме пулăшать, клетчатка сиенлĕ токсинсенчен хăтарать.

Çак пахчаçимĕç тымарĕ çеç мар, туни те усăллă. Ăна кăштах купăста яшкине, пăшăхланă купăстана хушма юрать.



# Сĕнӳсем

**Аш-какайран апат хатĕрленĕ чухне çак сĕнӳсемпе усă курăр. Вăл тутлăрах, техĕмлĕрех, сĕтеклĕрех пулĕ.**



❖Котлет хатĕрленĕ чухне какая ăшаланă, аш арманĕпе авăртнă суханпа хутăштарăр.

❖Аш арманĕпе авăртнă какайран хатĕрленĕ çимĕçе çу янă лайăх хĕртнĕ çатмара çеç, икĕ енчен те хĕреличчен ăшаламалла.

❖Котлета малтан пысăк çулăм çинче ăшаласан хыççăн хĕртнĕ духовкăра пĕçерсен вăл кăпăшрах та сĕтеклĕрех пулать.

❖Хытă какая аш арманĕпе авăртмалла-тăк арман шнекне / варринчи спираль евĕр хатĕр/ хĕвелçаврăнăш çăвĕ сĕрĕр.

❖Аш-какайран хатĕрленĕ апат тутине кăмпа е укроп порошокĕ техĕмлĕх кĕртет. Типĕтнĕ кăмпана е укропа порошок евĕр пуличчен вĕтетмелле те усă курмалла.

❖Яшка пĕçернĕ чухне какая вĕреме кĕнĕ шыва çеç ямалла, пĕчĕк çулăм çинче вĕретмелле.

❖Какай çиелтен хытса илемлĕ хĕрлĕ тĕспе витĕнтĕр тесен ăна ăшалас умĕн йӳçĕтнĕ сĕтпе е хăймапа сĕрмелле. Пысăк çулăм çинче икĕ енчен те ăшаланă хыççăн савăта хупламалла та çулăма пĕчĕклетсе çимĕç пиçиччен тытмалла.

*Нина ЦАРЫГИНА (56-11-80) хатĕрленĕ.*

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Чарусăр çерçисем сире кĕтсе чĕвĕлтетеççĕ

**Кĕнеке пичетленсе тухнине час-часах пепке çуралнипе танлаштараççĕ. Ăнсăртран мар ку паллах. Çут тĕнчене çĕнĕ чун килни яланах – пысăк савăнăç, уяв. Ашшĕ-амăшĕшĕн кăна мар, мĕнпур тăван-пĕтеншĕн, тус-юлташшăн. Çĕнĕ кăларăм тухсассăн вара автор кăна мар, издательствăри мĕнпур ĕçчен хĕпĕртет.**




Нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа Раиса Воробьевăн «Чарусăр çерçисем. Шумные воробушки» кĕнеки /куçаруçи – Людмила Симонова, редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Альбина Семенова/ кун çути курчĕ. Кĕçĕн çулти ачасем валли хатĕрленĕскерне вун тăватă сăвă кĕнĕ. Чи пĕлтерĕшли вара – вĕсене чăвашла та, вырăсла та вулама май пур. Куçару чĕлхи яка та илемлĕ.

Раиса Васильевна ачасен чунне ăнланни тӳрех сисĕнет. Вăл шăпăрлансене мĕн канăçсăрлантарнине аван пĕлет. Авă «Чи лайăх тетте» сăвăри Санюкпа Елюк çĕнĕ хĕрлĕ машинăна пайлаймаççĕ. Кашниех вылясшăн унпа. Анчах хирĕçни-тавлашни – килĕшӳсĕр пулăм. Автор çапла асăрхаттарать:

*Ачасем, çавах ан вăрçăр,*
*Туслă пулăр яланах.*
*Теттепе татуллăн выльăр,*
*Çакă кĕтĕр йăлана.*

Маттур ачасем те хамăр хушăрах. Акă Раман:

*Питĕ ăслă калаçать,*
*Юрăсем шăрантарать.* **/«Раман»/**

Кунсăр пуçне вăл «шутлама та хăнăхать», «ӳкерме те пултарать». Хаклă тантăшăмăрсем, эсир те Раманран кая мар ĕнтĕ, çапла-и?

Таня ятлă хĕр ача вара сирĕнпе хăех паллашасшăн:

*Чăвашла эп калаçатăп,*
*Чăваш юррине юрлатăп.*
*Эп ташлатăп чăвашла,*
*Тусăм, купăсна кала.* **/«Путене»/**

Кун пек хастар ачасемпе пуплемесĕр епле тӳсĕн? Вĕсем ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Пур ача та пĕрешкел мар. «Арçын аппа» сăвăри Маруках лара-тăра пĕлмест, сăнĕ хуралнă, урисем пылчăкланнă.

Тен, вĕçен кайăксемпе выльăх-чĕрлĕх те ачасенчен тĕслĕх илет? Чарусăрлăхĕпе çерçисем шăпăрлансенчен пĕртте кая мар. Шăв-шавне çĕклеме те пултараççĕ. Сăмахран:

*Лара-тăра пĕлменрен*
*Турат çинче сиккелеççĕ,*
*Ахальтен е кирлĕрен:*
*– Чĕрик! Чĕрик! Чĕрик! – теççĕ.* **/«Чарусăр çерçисем»/**

Кил картинчи пăрусем те вăр-вар, чупаççĕ, сиккелеççĕ. Вĕсене ачашламасăр ăçтан чăтăн-ха? Пăхса ытарма çук вĕт:

*Пĕр пăрушĕ чăпарскер,*
*Ун юлташĕ хăмăрскер.*
*Питĕ туслă пурăнаççĕ,*
*Ачасем пек куранаççĕ.* **/"Пăрусем»/**

Ытти сăвва хăвăр вуласса шанатпăр. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă, çĕнĕ кĕнекери хайлавсем вара кăсăклă. Чарусăр çерçисем сире кĕтсе чĕвĕлтетеççĕ, тантăшăмăрсем.

САВĂНĂÇ

# Чуна çывăх Сентти




*Чипер ача Сентти пур,*
*Чупса çӳрет урамра.*
*Кĕвентине утланса*
*Ача вылять лашалла.*

*Аслă урам тăршшĕпе*
*Чиксĕр тусан кăларать,*
*Хура чикан пек хура*
*Каçпа килне таврăнать.*

Ача чухне çак йĕркесене кам вуласа киленмен-ши? Тен, ку çаврасем Константин Ивановăн вилĕмсĕр «Нарспи» поэминчен пулнине те пĕлмен эпир ун чухне. Пурпĕр асра юлнă чипер ача Сентти. Мĕншĕн тесен пирĕнтен кашниех – кăштах Сентти. Эпир те ун пекех урамра чупса çӳренĕ, лашалла вылянă... Пирĕн вăйăсем компьютер экранĕ çинче мĕлтлетмен. Кун каçиччен тусанне те пайтах çăтнă. Кама чарса тăтăр вăл, ара? Савăнăç кӳрекен вăйă-кулăран епле уйрăлăн?

Хавасланăхĕпе, ачалла тасалăхĕпе /«хура чикан пек хура» пулин те/ чуна çывăх та пире Сентти. Ун пирки вуланă май куç умне хамăрăн ачалăх тухса тăрать. Аслисем час-часах тунсăхлаççĕ-çке уншăн. Пĕчĕк чухне вара темшĕн хăвăртрах çитĕнес килет. Ĕçлĕ те яваплă пысăк çынсен тĕнчи шутсăр илĕртӳллĕ те интереслĕ туйăнать. Анчах пур чухне те эпир ĕмĕтленнĕ пек килсе тухмасть çав. Ирĕксĕрех пĕр шухăшсăр ачаш ачалăх аса килет. Ахăртнех, çавăнпа Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа кун çути курнă çĕнĕ кĕнекене хумханса та çепĕççĕн тытрăм. «Сентти» ятлăскерне Константин Ивановăн «Нарспи» поэминчен суйласа илнĕ уйрăм сăвăсем кĕнĕ. Кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли хатĕрленĕ кăларăм «Кивелми кĕнеке» ярăмпа тухнă.

«Сентти» страницисене Иван Алексеев ӳкерчĕкĕсем илемлетеççĕ. Сăвă йĕркисене вуланăçем сăнарсем карталанса тухаççĕ: çырма, хĕвел, пĕлĕт, йăмра... Иван Васильевич йăлтах ăста та чĕрĕ кăтартса парать. Константин Васильевич та сăмаха çивĕч туять, кашнин хакне пĕлет:

*Çырма юхать кĕрлесе*
*Аслă ялăн çумĕпе.*
*Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе*
*Вылять унăн шевлипе.*

*Тăрă шывăн ăшĕнче*
*Кăвак пĕлĕт явăнать,*
*Ватă йăмра тайăлса*
*Тĕсне пăхса савăнать.*

Кĕнекере, чăнах та, çутçанталăка сăнланă вырăнсем йышлă. Константин Иванов чи пĕлтерĕшлине ансат та кĕскен, çав хушăрах илемлĕ калама пĕлет. «Çулталăк хушши» сăвах илер. Кашни çаври – тупмалли юмах. Сăмахран:

*Шурă юр ирĕлет,*
*Çеçен хир чĕрĕлет,*
*Ешĕл курăк ӳсет...*
*Вăл хăçан пулать-ши?*

Çакнашкал хайлавсемпе паллашса çамрăк вулавçă çутçанталăка сăнама, чи кирлине асăрхама, пулăмсен çыхăнăвне палăртма вĕренет. Эппин, ырă чунлăрах, сисĕмлĕрех пулма та хăнăхать. Ку туртăма вара упрамалла. Умри çула ĕмĕр тăршшĕпе çутатса пытăр вăл.

Ольга АВСТРИЙСКАЯ хатĕрленĕ.

# Хавасла 2015 самант

## Сăмахкаçмăш




1. Чăваш халăх артисчĕ – Кĕлпук мучи. 2. Чăваш композиторĕсен пуçлăхĕ. 3. «Белые розы» юрра шăрантаракан. 4. Водород бомбин «ашшĕ». 5. … – Ларионов – Крутов. 6. Тахçан вăл çĕршыв старости пулнă. 7. «Бриллиантовая рука» фильмри Лелик рольне вылякан артист. 8. «Жди меня» сăвă йĕркисен авторĕ. 9. Лаша спорчĕ енĕпе Олимп чемпионĕ пулнăскер. 10. Хоккей енĕпе чапа тухнă тренер. 11. Вырăс штангисчĕ, Олимп чемпионĕ. 12. Пĕрремĕш космонавт. 13. «Пусть говорят» передачăна ертсе пыракан. 14. «На-найçăсенчен» пĕри. 15. Космонавт. 16. … – Полупанов – Фирсов.

## Ик-виç çавра спорт тавра




1. Литвари чапа тухнă баскетболист. 2. Чăваш боксерĕ, Олимп чемпионĕ. 3. Раççей гимнасчĕ, тĕнче чемпионĕ. 4. Хоккеист, Раççей командин капитанĕ пулнăскер. 5. Англири футбол команди. 6. СССР вăхăтĕнчи паллă боксер. 7. Йывăр виçеллĕ штангист, Олимп чемпионĕ. 8. Чăваш йĕлтĕрçи, Олимп чемпионĕ. 9. ... – Полупанов-Фирсов. 10. Штангист, Олимп чемпионĕ. 11. Чехи футболисчĕ, «Ювентус» командăра палăрнăскер. 12. Пирĕн теннисистка, вăлах спорт комментаторĕ те пулнă. 13. Омскри хоккей команди. 14. Профи мар. 15. Конькипе илемлĕ ярăнакансене чапа кăларнă тренер. 16. Шыв айĕнче ишмелли хатĕр. 17. Çĕнтерÿçĕсене чысламалли хут. 18. Испанири футбол команди. 19. Вырăс шахматисчĕ. 20. Йĕлтĕрпе чупса палăрнă Казахстан спортсменĕ. 21. Тахçан ЦСКА командăра çăлтăр пулнă баскетболист. 22. Бобслей енĕпе вăл Сочире иртнерĕ Олимпиадăра çĕнтернĕ. 23. Вырăс шахматисчĕ, тĕнче чемпионĕ.

## Лабиринтăн вĕçĕ пур-ши? Хăш çулпала утмалла?



**Ăнлантарса пани:** Çаврашкари ыйтусем çине тĕрĕс хуравласассăн хура ункăсенче ваттисен икĕ каларăшне тупса вулама пулать.




1. Ашшĕ тÿрĕ, амăшĕ кукăр, хĕрĕ начар, ывăлĕ усал /туп.юм./. 2. Унпа чир-чĕртен сипленеççĕ. 3. Чапаевăн харсăр пулеметчици. 4. Самолетсен гаражĕ. 5. Вăл Шупашкара шăварса тăрать. 6. Вĕрÿ-суру ăсчахĕ. 7. Амăшĕ çине вĕрекен йытă. 8. Африкăри халăх. 9. Пичче мар. 10. Пÿрт пайĕ. 11. Эстони шахматисчĕ. 12. Пулă тытмалли хатĕр.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***